П. Б. О

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 АПРЕЛ 28 КĔСНЕРНИКУН 97 (4910)-мĕш №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйăн 6—23

Коммуниссем! Партире тăман массăсемпе çирĕпрех çыхăнăр! Суйлав кампанинче чи кирли—партире тăман массăсенчен уйăрăлмасăр, партире тăманнисемпе пĕрле ĕçлемеле, вĕсемпе пĕрле сойузлă тата автономлă советлă социалисăмлă республикăсен Верховнăй Совечĕсене кандидатсем палăртмала!

(ПСК(б)П Тĕпкомĕ 1938 çулхи Майăн 1-мĕшне ирттерме панă лозунгсенчен)

Республикăра партилĕ-пропагандăлă ĕç мĕнле тăни çинчен тата вăл ĕçе лайăхлатмали майсем çинчен

ПСК(б)П Обкомĕ йышăннă постановлени

Партилĕ-пропагандăлă ĕç республикăри парторганизацисенче çителĕксĕр пулса пырать, тесе йышăнать Обком. Çак ĕçĕн тĕп çитменлĕхĕсем акă мĕнре:

1. Нумай районсенче кружоксене пухса йĕркелессине вĕренекенсен пĕлĕвне шута илмесĕр тăваççĕ, йалти районсенче кустри кружоксене вĕренекенсем заңатисене 8—10 километр таран çÿреççĕ.

2. Вĕренекенсем хăйсем тĕллĕн ĕçлессине организацилемен, вĕренекенсем заңатисем хушшинчи вăхăтра кирлĕ пек пулăшăва тата консуљтаци илеймеççĕ, заңатисене темă тăрăх хатĕрленмесĕр пыраççĕ. Чăннипе илсен, нумай вĕренекенсен пĕтĕм вĕренĕвĕ кружок заңатийĕсенче пропагандис каласăвĕсене итленипе кăна пулса пырать. Паллах, çакăн пек вĕрени, уйрăмах партин историне вĕренесси, кирлĕ результатсене памаст — вĕренекенсем вĕренмели материала ăнланса илеймеççĕ.

3. Чылай кружоксем тĕплĕн тунă плансăр ĕçлеççĕ. Час-часах кулленхи политикăна вĕреннĕ вăхăтра нумайлăха программăран тухса урăх темă çине каяççĕ те, программăна вĕренсе пĕтересси́не вăраха йараççĕ, вĕренÿ пахалăхне чакараççĕ.

4. Пропагандиссем хăйсем те кружок заңатисене темă тăрăх хатĕрленмесĕр пынă тĕслĕхсем те сахал мар.

5. Парти организацисем тата райкомсем коммуниссемпе сочувствуйушчисен вĕренĕвне тĕрĕс организацилессишĕн тăрăшманнипе пула, кружоксен заңатийĕсем час-часах пулмасăр ирттеççĕ. Сăмахран, Пăрачкав районĕнче 1937 çулти нойабĕрĕнчен пуçласа 1938 çулти феврађ уйăхне çитиччен 83 заңати пулмасăр иртнĕ, вăл ĕнтĕ, чăннипе илсен, Пăрачкав районĕнчи кружоксем ĕçleme чарăннине пĕлтерет. Республикăра партилĕ вĕренÿве йавăстарман коммуниссем 500 шутланаççĕ.

6. Парти кабинечĕсем тата республикăри партвĕренÿ çурчĕ çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Партилĕ пропагандиссен штатне пухса çитермен. Лайăх хатĕрленсе çитнисене час-часах урăх ĕçе куçараççĕ.

Партилĕ вĕренÿ ĕçне çакăн пек йухăнтарса йани ПСК(б)П райкомĕсем тата ПСК(б)П Обкомĕн пропагандăпа агитаци тата пичет пайĕ çак ĕçпе ĕçleme пăрахнă пирки, вăл ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасса шаннă пирки пулнă тесе шутлать ПСК(б)П Обкомĕ.

Çавна шута илсе ПСК(б)П Обкомĕ **çапла йышăнать:**

ПСК(б)П райкомĕсене тата Шупашкар хула комитетне чи сывăх вăхăтра парти организацисенчĕ парти вĕренĕвĕ мĕнле тăнине тĕрĕслеме, кашни кружок ĕçĕнчи ситменлĕхсене палăртма тата партилĕ пропагандăна лайăхлатма пур тивĕçлĕ мерăсене те йышăнма хушас. Уйрăмăн илсен, çаксене тума кирлĕ:

1. Шкулсемпе кружоксенче вĕренекенсене пухса йĕркелессинчи халиччене пулса пыракан ситменлĕхсене пĕтермеле, кружоксене вађђи хатĕрленÿ çÿлĕшĕ пĕр пекрех вĕренекенсене суйласа илмеле. Кирлĕ пулсан, ытларах хатĕрленнĕ йе сахалтарах хатĕрленсе çитнĕ йулташсем вађђи ççĕ кружоксем тумала, кружоксен малтанхи ĕçне вĕренекенсен пĕлĕвне шута илсе организацилемеле. Йалсенчи кустри кружоксене вĕренекен пурăнакан вырăнтан кружок заңатийĕсем пулакан вырăна çити 3—4 километртан ытла мар пулмала туса организацилемеле. Кирлех пулсан, вĕренекенсемшĕн аванрах тăвас тесе, пысăк мар кустри кружоксем тумала (3—5 çын). Хутла сахал пĕлекен коммуниссене грамăтă шкулĕсенче вĕрентмеле.

2. Кружоксемпе шкулсене пурне те хатĕрленсе çитнĕ пропагандиссем памала. Пропагандис вырăнĕнче çак ĕçе тума пултаракан райком çекретарĕсемпе, райком инструктăрĕсемпе, районри парт-активри ытти ответлă работниксемпе те обйазательнă усă курмала. ПСК(б)П райкомĕсене тата Обкомăн пропагандăпа агитаци тата пичет пайне пропагандиссемпе парткабинетсен заведуйушчийĕсене Обком бÿровĕ ирĕк памасăр пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçарма чарас. Штатлă мар пропагандиссене ПСК(б)П райкомĕсен çирĕплетмеле.

3. Хуласенчи шкулсемпе кружоксем вађђи уйăхра 5 заңати, йалсенчи кустри кружоксем вађђи — 3 заңати тата кашни хутах 5—6 сехетшер ирттермеле, пĕччен коммуниссемпе тата парти активĕпе уйăхра 2 хутран кайа мар заңати ирттермеле тăвас.

4. Харпăрхăй ирĕкĕпе (Обком уйрăмăн кăтартса памасăр) программăна темăсем хушса кĕртме чарас. Пур кружоксемпе шкулсенче те кулленхи политикă ыйтăвĕсем тăрăх кашни заңати хыççăнах пропагандис çур сехетлĕ каласусем ирттермеле тăвас.

5. Парткабинет заведуйушчийĕсене, штатлă пропагандиссене тата ПСК(б)П райкомĕсен инструктăрĕсене тивĕçлĕ темă тăрăх шкулра йе кружокра вĕренекенсене пурне те шкулăн йе кружокăн черетлĕ заңатине хатĕрленессинче парткабинетра, вулав çуртĕнче йе хăйсен килĕнче (кашни вĕренекенĕн условийĕсемпе килĕшсе) консуљтаци парса пулăшассине тума, тата парткабинетсенче (хуласенче тата район центрĕсенче), вĕренекене вађђи пушă вăхăтра вулав пÿлĕмĕпе, литературăпа тата консуљтаципе усă курса черетлĕ заңатине хатĕрленме пур условисене те туса пама хушас.

Радиолекцисене илтĕ те пысăк хака хурса, ПСК(б)П Обкомĕ райкомсене вăл лекцисене (тивĕçлĕ дисциплинăсем тăрăх) партвĕренÿ кружокĕсенче вĕренекенсем тата пропагандиссем пурте шĕр сиктерmesĕр йалапах çÿрессине пурнăçа кĕртмеле тума хушать.

ПСК(б)П Обкомĕн пропагандăпа агитаци тата пичет пайне партвĕренÿ йĕркипе вĕренекенсем тата парткабинетсем вађђи кирлĕ литературăн минимумне тупса пама мерăсем йышăнма хушас.

6. ПСК(б)П райком, çекретарĕсене, парткабинет заведуйушчийĕсене тата партвĕрентÿ çуртне пропçеминарсен ĕçпе вĕсем пропагандиссен теорилĕ тата методикăлă пĕлÿве хăпартма пулăшмала туса организацилеме хушас. Çеминарсенче тăтăшах ПСК(б)П историйĕ, ленинисăм, ССРС халăхĕсен историйĕ т. ыт. тăрăх заңатисем ирттермелĕ. Тĕнчери лару-тăру тата шалти политикă ыйтăвĕсем тĕлĕшĕнчен партилĕ пропагандă методикин ыйтăвĕсем тăрăх докладсем тата лекцисем тумала.

Райком çекретарĕсем тата куљтпроп заведуйушчийĕсем, çавăн пекех ПСК(б)П Обкомĕн ответлă работникĕсем партвĕренÿ шкулĕсемпе кружокĕсен заңатийĕсенче пулма, вĕсен ĕçне тĕрĕслеме тата пропагандиссене пулăшса пыма тивĕç. ПСК(б)П райкомĕсенĕ вăхăтран-вăхăта райком ларăвĕсенче пропагандиссемпе парторг доклачĕсене итлеме, çавăн пекех тата кашни кружокăн вĕренÿ планне уйрăмăн пăхса тухма тата çирĕплетме хушас.

7. ПСК(б)П райкомĕсен заочниксен кружокĕсен ĕçне, çавăн пекех партилĕ вĕренÿн пĕтĕм ĕçне йертсе пырассипе, заочниксемшĕн тăрăшассине ИМЗО çине сирсе хумасăр, тÿррĕмĕнех хăйсем çине илмеле. ИМЗО-па—Белорусов йулташа заочниксен кружокĕсенчи заңатисене идейăлă-теорилĕ пысăк çÿлĕшре ирттерессине тума хушас.

8. ПСК(б)П Обкомĕн пропагандăпа агитаци тата пичет пайне, партвĕрентÿвĕн тĕп çуртне — районсенчи пропагандиссен çеминарĕсене тата парти активĕн пухăвĕсене, çавăн пекех тата парти вĕренĕвĕн шкулĕсемпе кружокĕсенче вĕренекенсен конференцийĕсене облаçри партактивăн квалификацилĕ работникĕсене парти историн тĕп ыйтăвĕсем, тĕнчери лару-тăру тата шалти политикă ыйтăвĕсем тăрăх докладсемпе лекцисем тума йама хушас.

9. Республикăри тата районсенчи хаçат редакторĕсене пичетре шкулсен, кружоксен, пропçеминарсен тата парти кабинечĕсен ĕçĕсене тăтăшах çутатса пыма хушас. Пропагандиссен, парткабинет заведуйушчийĕсен тата Партвĕренÿ Тĕп çурчĕн партилĕ-пропагандăлă ĕçри опыта пичетре çутатас тĕлĕшпе активлăн хутшăнса ĕçлемеле.

ПСК(б)П облаç комитечĕ ПСК(б)П райкомĕсене, Шупашкар хули комитетне, çавăн пекех тата республикăри пур пуçламăш парторганизацисене те коммуниссен партилĕ вĕренĕвĕн ĕçне кулленех ĕçлеме, пур парторганизацисем те тата кашни коммунис уйрăмăн парти уставĕн парти членĕн обйазаннăçĕ çинчен калакан 2-мĕш пунктне — „хăйĕн идейăлă пĕлÿне хăпартас тĕлĕшпе, марксăм-ленинисăм никĕсĕсене, партин политикăлă тата организацилĕ чи кирлĕ решенийĕсене вĕренсе пĕлес тата вĕсене партире тăман массăсене ăнлантарса парас тĕлĕшпе ывăнма пĕлмесĕр ĕçлессине" чăннипех пурнăçа кĕртмеле тума хушать.

ПСК(б)П Обкомĕн çекретарĕ **Г. ИВАНОВ.**

Суйлав умĕнхи пухусенче

Армйан СС Республикĕнче

Апрелĕн 25-мĕшĕнче Армйан СС Рĕспубликĕнчи Котайск районĕнчи «Анаствац» („Безбожник") колхозра суйлав умĕнхи пуху пулса иртнĕ. Пухура 500 çын пулнă.

Йышăннă резољуцире пухура пулнисем пурте пĕр шухăшлăн Армйан СС Республикĕн Верховнăй Совет депутатне суйлама кандидатсене И. В. Сталин, В. М. Молотăв, Л. М. Каганович, К. Й. Ворошилăв, Н. И. Йежов, А. И. Микойан, Л. П. Берийа, Г. М. Маленков, И. Д. Папанин йулташсене тăратнă.

Çавăн пекех Армйан СС Республикĕн Верховнăй Совет депутатне суйлама кандидатсене Армйан СС Республикĕн Шалти ĕçсен Халăх Комиссарне Хворостйан йулташа тата „Анаствац" колхозĕнчи чи лайăх стахановкăна Апкарйан йулташа тăратнă.

Грузин СС Республикĕнче

Тбилисири Çар училищинчи курсантсем, командирсемпе политработниксем хăйсен суйлав умĕнхи пухăвĕнче Грузин СС Республикĕн Верховнăй Совет депутатне суйлама кандидатсене Климент Йефремăвич Ворошилăв йулташа тата Кавказ лешйенчи Çар Округĕн çарсен командуйушчине Тÿленĕв комкора тăратнă.

(ТАСС)

Суйлав кампанин малтанхи кунĕ

Апрелĕн 26-мĕшĕнче Российă Федерацин пĕтĕм территорийĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне суйламали суйлав кампанийĕ пуçланнă. Вăл кун Мускавра округсенчи суйлав комиçсийĕсене представительсем тăратас йатпа чылай пухусем пулса иртнĕ. Пухусем пур çĕрте те пысăк çĕкленÿпе иртнĕ. Ĕççыннисем суйлав комиççисене чи лайăх çынсене, партири тата партири мар бољшевиксене, Ленин—Сталин партине вĕçĕмсĕр йуратса тăракан çынсене пĕр шухăшлăн тăратаççĕ.

„Красная роза" хапрăкри рабочисемпе служăщисем округри суйлав комиççи членне стахановкăна—банкаброшницă Залогинă йулташа тăратнă. Л. М. Каганович йачĕпе тăракан прожектăр савăтĕнчи коммунисла организаци строгаљщике — Кузнецов стахановеца тăратнă, Сталински районĕнчи учительсен пухăвĕ—партире тăман Доброхотăва учительницăна, Бауманск районĕнчи медицинă работникĕсем—Манайĕв доктăра тăратнă.

Пухусенче тухса каласакансем пурте РСФСР Верховнăй Совет суйлавĕсене коммуниссемпе партире тăманнисен блокне малала та çирĕплетсе пынипе ирттерме пулнине кăтартса параççĕ.

Столицăри суйлав округĕсенче РСФСР Верховнăй Совечĕн çитес суйлавĕсене хатĕрленесси вирлĕн пулса пырать. Суйлав участкисем вађђи çуртсем уйăрса параççĕ, вĕсенчен хăшпĕрине йусаççĕ, телефонсем кĕртеççĕ, ССР Союзĕн Верховнăй Совет суйлавĕнчен йулнă суйлав участкисен оборудованисем мĕнле сыхланса усранние тĕрĕслеççĕ.

Украинăра, Белоруççинче, Узбекистанра, Азербайджанра республикăсен Верховнăй Совечĕсене суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округсенчи суйлав комиççисене кандидатурăсем тăратас йатпа суйлавçăсен пухăвĕсем пулса иртеççĕ.

(ТАСС).

Коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕн çирĕплĕхĕшĕн

Шупашкарти „Хĕрлĕ мăлатук" ертелĕнчи рабочисен митингĕнче РСФСР Верховнăй Советне суйламали кун çинчен йышăннă постановленине вуласа ăнлантарнă.

— Халĕ епĕ апрел уйăхĕнчи çуруйăхлăх плана 107,9 процент тултартăм. РСФСР Верховнăй Совет суйлавне хатĕрленнĕ май кашни уйăхри ĕç нормине 250 проц. кайа мар тултарса пыма пулатăп. Сталинла Конституцире çырнă правасемпе епĕр туллин усă куратпăр. РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене çĕршывăн чи шанчăклă ывăлĕсемпе хĕрĕсене суйлатпăр—тенĕ Бронникăв стахановец.

Митингра йышăннă резољуцинче çапла каланă:

„Чечекленсе ÿсекен телейлĕ çĕршыври халăх РСФСР Верховнăй Совет суйлавне Ленин—Сталин парти йертсе пынипе тунă пысăк çитĕнÿсемпе кĕтсе илет. Епĕр стахановла ĕçлессине нихçанхинчен те ытла вăйлатса, иккĕмĕш кварталри промфинплана срукчен тултаратпăр. Суйлава кăтартулăн хатĕрленетпĕр, суйлав кампанине ăнлăн сарса пыратпăр. Коммуниссемпе партире тăманнисен блокне çирĕплететпĕр. Иуйнĕн 26-мĕшĕнче пурте пĕр çын пек пулса Ленин—Сталин партишĕн чĕререн тăрăшса ĕçлекен çынсемшĕн сасăлатпăр" тенĕ.

Йертсе пыракан парторгăнсен суйлавĕсем

ЛЕНИНГРАД. Ленин хулинчи пуçламĕш парторганизацисен отчотпа суйлав пухăвĕсем пысăк активлăхпа, идейăпа политикă йенчен пысăк çирĕплĕхпе ирттеççĕ. Апрелĕн 25-мĕш тĕлне суйлавсем 2.955 организацирен 1417 парторганизацинче пулса иртнĕ.

Пухусем организацилĕн тата ĕçлĕн ирттеççĕ. Коммуниссем пухусене 93—99 процент таран пыраççĕ.

Пренисем Ленинградри парти организацин идейăлă тата политикăлă пĕрлĕхне, вăл Сталинла Тĕп Комитет тавра таччăн пĕтĕçсе тăнине уççăн кăтартса параççĕ. Коммуниссем сыхăлăха ÿстерес тата халăх тăшманĕсене хирĕç пĕр шеллемесĕр кĕрешсе пырас ыйтăва мĕн пур çивечлĕхпе лартаççĕ. Тухса каласакансем халăх тăшманĕсем тунă сăтăрла ĕçсен йулашкийĕсене пĕтерес, идейăлă тата политикăлă пĕлĕве ÿстерес, парти кандидачĕсемпе тата сочувствуйушчисемпе ĕçлессине лайăхлатас, кадрсене пысăкрах ĕçсене куçарса пырас тата çĕнĕ актива вĕрентсе ÿстерес ыйтусем çине ытларах çавăрăнса пăхаççĕ. Пренисенче малашне парти организацисен партире тăман сар ака массăсем хушшинчи çыхăнăва çирĕплетес ыйтусем те пысăк вырăн йышăнаççĕ.

Çĕнĕ парткомсен составне ĕçре тĕрĕсленнĕ, парти ĕçне чĕрĕрен йуратса ĕçлекен йулташсене суйлаççĕ. Карл Маркс йачĕпе тăракан савăтри парткома Клишин, Григорйĕв, Попов тата Абакумăв йулташсене чи пирвайхи хут суйланă. Клишин йулташ ССР Сойузĕн Верховнăй Совет суйлав кампани вăхăтĕнче 63-мĕш суйлав участкинче доверĕннăй помошникĕ пулса ĕçленĕ. Суйлавсем хыççăн вăл халăх хушшинче массăла ĕçе туса пыма пăрахман. Хађхи вăхăтра, агитпунктра политикăлă-массăлă ĕçĕн организаторĕ пулса, Клишин йулташ РСФСР Верховнăй Совет суйлавĕсене хатĕрленес тĕлĕшпе пысăк ĕç туса пырать. Инженер Григорйĕв йулташ савăтри чи лайăх пропагандиссенчен пĕри. Ленин йачĕпе тăракан савăтри парткома 11 члентан—8-шне чи пирвайхи хут суйланă. Вĕсем хушшинче—сталелитейнăй цехри парторганизатăр Чепрунов йулташ та пур. Вăл кĕске срукрах цехри парторганизацине малта пыракан организаци туса хума пултарнă.

(ТАСС).

Тăван çĕршывăн оборонине тĕреклетер

Осоавиахимăн ЧАССР Тĕп Советĕнче ĕçлекенсем йышăннă резољуцирен

Епĕр, Осоавиахим Тĕп Советĕнче ĕçлекенсем, РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кунĕ çинчен йышăннă постановленисене пысăк хаваслăхпа йышăнтăмăр.

Çитес суйлавсене парти хушнă пек, хаклă Сталин йулташ хушнă пек ирттерме пулса осоавиахимла сăмах паратпăр. Тĕнчери чи демократилĕ суйлав саккунĕ тăрăх пулса иртекен РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕ пирĕн гигантла çитĕнÿсене тепĕр хут çирĕплетни пулать. Çитес суйлавра епĕр коммуниссемпе партире тăманнисен блокне тата ытларах çирĕплететпĕр, суйлавçăсене 100 проценчĕпех суйлава хутшăнтарассишĕн пĕтĕм вăйа хурса ĕçлетпĕр. Епĕр РСФСР тата ЧАССР Конституцийĕсене, суйлав саккунĕсене лайăх вĕренме, суйлавçăсене çак документсене вĕренме пулăшма пулатпăр.

Суйлав кунне—иунĕн 26-мĕшне Осоавиахим ĕçне вăйлатнипе кĕтсе илетпĕр. Сталин йулташ хамăрăн халăха йалапах мобилизацилĕ хатĕр тытса тăмала тенине асра тытса ĕçлетпĕр. Мĕншĕн тесен, капиталисăмла çĕршывсем, чи малтан фашисла çĕршывсем, ССР Сойузĕ çине вăрçăпа тапăнма йулашки вăйне хурса хатĕрленеççĕ.

РСФСР тата ЧАССR Верховнăй Совечĕсен суйлавне хатĕрленсе, ПВХО тата Ворошилăв пек тĕл перекенсен значокĕсене илекенсене вĕрентсе хатĕрлессине вăйлататпăр. Революцилĕ сыхăлăха тата ытларах вăйлатса, пролетарилĕ революцин тăшманĕсене хирĕç нимĕн хĕрхенмесĕр кĕрешетпĕр, тăшманĕсене, троцкисла-бухаринла, буржуалă-националисла бандăсене нимĕн хăвармиччен пĕтерессишĕн кĕрешетпĕр.

Сывă пултăр Коммунисла парти!

Сывă пултăр тĕнчери чи демократилĕ Конституци туса паракан Сталин йулташ!

Йал уйав тумĕпе тумланчĕ

Ишекри Сталин йачĕпе тăракан (Ишлей р.) колхозри колхозниксем РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кампанийĕ пуçланнине çав тери пысăк савăнăçпа кĕтсе илчĕç. Ишекри пуљницă, шкул, йалсовет тата колхоз правлени çурчĕсене йалавсем çакса илемлетнĕ. Йал праçник тумĕпе тумланчĕ.

Халĕ колхозниксем çуракинче ĕçлеççĕ. Вăйлă тырпулшăн кĕрешĕве хастарлăн тухрĕç. Кашни бригадăрах хаçат вулакансем, агитаторсем пур. Агитаторсем РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кампанийĕ пуçланни çинчен уйра ĕçлекен колхозниксене ăнлантарса пачĕç. Васильйĕв агитатор апрелĕн 26-мĕшĕнче 2-мĕшпе 3-мĕш бригадăсенче ĕçлекен колхозниксене хаçат вуласа пачĕ.

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлав Положенисене вĕренме колхозра 10 кружок организациленĕ. Малашне кружоксен заңатисене уйра ирттерме тытăнатпăр.

Кудрйавцĕв.

Суйлав тĕлне

Мишерте (Ишлей р.) çитĕннисен шкулĕ ĕçлеме тытăнчĕ. Шкулта пурĕ 22 çын вĕренеççĕ. Вĕсене РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кунĕ тĕлне вĕрентсе кăлараççĕ.

М. Сорокин.

Çак кунсенче Вăрманйĕнĕш (Шăхасан р.) йалсоветĕче çитĕннисен шкулĕ ĕçлеме пуçларĕ. Унта 26 хĕрарăм вĕренеççĕ. Заңатисем йĕркелĕ пулса пыраççĕ. Вĕсене вĕреннĕ вăхăтрах РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисем çинчен те ăнлантараççĕ. Комсомолецсем шкула çÿреме пултарайман ачалă хĕрарăмсене килĕсене çÿресе вĕрентеççĕ.

Д. Титов.

Ытти сойузлă тата автономлă республикăсен суйлавçисене РСФСР Верховнăй Совет суйлавĕсенче сасăламали права парасси çинчен

Пĕтĕм Российă Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕ йышăннă постановлени

Пĕтĕм Российă Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕ çапла йышăнать:

1. РСФСР территорине куçса килнĕ чухне ытти сойузлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсенче „сасăлама права паракан удостоверени" илнĕ суйлавçăсене вĕсем хăйсем камне пĕлтерекен удостоверенипе „сасăлама права паракан удостоверени" кăтартсан, вăл суйлавçăсене РСФСР Конституцин 18-мĕш статйи тăрăх РСФСР Верховнăй Совет суйлавĕсенче сасăламали права парас.

2. Ытти сойузлă тата автономлă республикăсен суйлавçисем вађђи, вĕсем РСФСР территоринчĕ куçса çÿресе пурăнаççĕ пулсан, Сойузлă тата Автономлă республикăсен тивĕçлĕ Тĕпĕçтăвком Президиумĕсем ирĕк панипе, сойузлă тата автономлă республикăсен суйлав округĕсене кĕрекен суйлав участкисем тума йурать, унта 25 суйлавçăран кайа мар пулмала.

Пĕтĕм Российă Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Председателĕ **М. КАЛИНИН.**

Пĕтĕм Российă Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Çекретарĕшĕн Пĕтĕм Российă Тĕпĕçтăвком Президиумĕн Членĕ **А. АРТЮХИНА.**

Мускав, Кремĕл. 1938 çулхи апрелĕн 26-мĕш.

Суйлав кампани пуçламĕшĕ Мускавра

М. И. Калинин йулташ тухса калани

Апрелĕн 26 мĕшĕнче столицăра РСФСР Верховнăй Советне суйламали суйлав кампанийĕ пуçланнă. Çав куна çитес суйлавсен йачĕпе пысăк пуху тунипе паллă тунă. Столицăри Ленински районĕнчи агитаторсен, пропагандиссен, беседчиксен, савăтсемпе хапрăксенчи стахановецсен пухăвĕнче 700 çын пулнă.

Пĕтĕм тĕнчери лару-тăру çинчен ССР Сойузĕн Верховнăй Совет Президиум Председателĕ М. И. Калинин йулташ доклад туса панă. Пухăва пынисем Калинин йулташа нумайччен тăвăллăн оваци тунипе кĕтсе илнĕ.

Михаил Иванăвич икĕ сехет çурă каланă.

Уçăмлă докладĕнче Калинин йулташ капитал çĕршывĕсенчи рабочи класăн пурнăçĕ çинчен, буржуалă государствăсен политики çинчен тĕплĕн çутатса панă, Испанипе Китай халăхĕсем хăйсен ирĕклĕхĕшĕн тата хăйсем никама пăхăнас марришĕн паттăрăн кĕрешни çинчен каласа панă.

Доклада пысăк тимлĕхпе итленĕ.

Пухура пулнисем Калинин йулташа алă çупса тата „урра" кăшкăрса ăсатса йанă. (ТАСС).

Парти пурнăçĕ

Парти пухăвĕсем хватерсенче пулса иртнĕ

Трак районĕнчи крахмал тăвакан „Большевик" савăт çумĕнчи парти пуçламĕш организацийĕнче виçĕ коммунис. Çав организацисенче халĕ парти райкомĕн отчотне туса пана. Парти пухăвне виçĕ коммунисĕ те парти билечĕсемсĕр пынă пулнă. Иванова коммунискă парти билечĕ çине иртнĕ çулти декабĕртенпе член укçи тӳленине паллă тутарман. Парторг Йефимăвă йулташ парти пухăвне ытларах хăйĕн хăватерĕнче туса иртернĕ. Хăшпĕр протоколсене çырса пĕтермесĕрех çĕлесе хунă.

Çак çитменлĕхсемпе йанăшсем вĕсем акă мĕн çинчен калаççĕ: савăтри коммуниссем семйелле пурăннипе ĕçри çитменлĕхсене курми пулса кайнă. Парти райкомĕ ку организацинчи коммуниссемпе сахал ĕçленĕ. Райком инструкторĕсем кунта иртнĕ çулта икĕ хут çеç пырса кайнă. Ĕçри çитменлĕхсене тӳрлетес пирки вĕсем ним те туман.

Парти пуçламĕш организацийĕ савăтри рабочисемпе çыхăнса ĕçлемен. Стахановецсемпе ударниксене сочувствуйушчисен ретне пĕр çынна та илмен.

Парти пухăвĕ çак çулте асăннă çитменлĕхсене кĕске вăхăтра пĕтерме, рабочисем хушшинче политикăла-массăлă ĕçе чĕртсе йама, стахановецсемпе ударниксене парти ретне илессине вăйлатма хушса хăварчĕ.

Закамский.

Партине илессипе çителĕксĕр ĕçленĕ

ЕЛĔК. Халĕ партин пур организацийĕсенче те отчотпа суйлав пухăвĕсем пулса иртеççĕ. Паиклири парти пуçламĕш организацин отчотлă пухăвĕ питĕ активлă иртрĕ. Парторг отчочĕ тăрăх, прениире тухса калаçнă йулташсем парти организацин çулталăк хушшинчи ĕçĕсене тишкĕрсе, чылай пысăк çитменлĕхсене кăтартса пачĕç. Парти организаци активлă ĕçлекен комсомолецсене партине илес йенĕпе çителексĕр ĕçленĕ, çулталăк хушшинче пĕр çынна та партине илмен.

Чăваш Сорамри пуçламĕш организацинче те партине илессипе халĕ çеç тимлĕн ĕçлеме тытăннă. Икĕ комсомолеца тата сочувствуйушчине тăнă Потапăв йулташа парти кандидатне илнĕ. Парторг пулса ĕçленĕ Белов йулташ комсомол организацийе йертсе пыман. Партин очотпа суйлав пухăвĕ хуппăн (вăрттăн) сасăласа Петров йулташа парторга суйласа хăварчĕ.

Вас. Йефремăв.

4 уйăх хушши парти вĕренĕвĕ пулман

Апрелĕн 22-мĕшĕнче Çутĕç Халăх Комиссариачĕ çумĕнчи парти пуçламĕш организацин отчотпа суйлав пухăвĕ пулса иртрĕ. Парторг отчочĕ тăрăх 12 коммунисран прениире 9-шĕ тухса каларĕç. Вĕсем парторганизацин ĕçри çитменлĕхсене чылай кăтартса хăварчĕç.

Парторг Смелов йулташ хăйĕн отчотĕнче парти Тĕпкомĕн февраль-март тата çак çулти йанварти пленумĕсен решенийĕсене мĕнле пурнăçласа пыни çинчен тĕплĕн каласа памарĕ. Парторганизацинче парти вĕренĕвне халиччененех хаклаççĕ. Йанвар уйăхĕнчен вара пĕр заньяти те туса ирттермен. Пропагандиссем пĕрмайех улшăнса пынă. Парти кружокĕнче çулталăк хушшинче 4 пропагандис, комсомол кружокĕнче виççĕ улшăннă.

Йулашки вăхăтра комсомол кружокĕпе парти членĕ Трофимăв йулташ йертсе пынă. Вĕсене парти историйе программине вĕрентсе кăларнă, малала вĕренме йаман. Комсомол хушшинче ĕçлеме 4 коммуниса çирĕплетсе улăштарнă. Анчах вĕсенчен пĕри те комсомол ĕçне малала йарассипе ĕçлемен. Çулталăк хушшинче пурĕ те 3 çынна кăна комсомола илнĕ.

Парти организаци те хăйĕн ретне ӳстерес тĕлĕшпе ĕçлемен. Пĕр çынна та партине илмен. 1925 çултанпа парти кандидатĕнче тăракана халĕ те парти членне куçарман.

Кăçал Çутĕç Халăх Комиссариачĕ чылай çынсене ответлă ĕçсенче ĕçлеме лартнă. Анчах çав çынсене кирлĕ таран пулăшу паман. Тухса калакансем Çутĕç Халăх Комиссарĕ Оçипăв йулташа хăйĕн аппаратĕнчи работникĕсемпе çыхăнса ĕçлеменшĕн хытă критиклерĕç. Работниксем хăйсен пурнăçĕ çинчен калаçма Оçипăв йулташ патне пырсан, вăл вĕсемпе калаçасшăн та пулман. Ун çинчен пухусенче тухса калакашăн кайран хĕстернисем те пулнă.

Пуху парторг начар ĕçленĕ тесе йышăнчĕ. Парторганизаци ĕçне вăйлатас майпа коммуниссем чылай кăтартусем пачĕç.

Атлашĕвă.

Отчотра çитменлĕхсем çинчен сахал каланă

Иртнĕ кунсенче партин Тутаркас райкомĕ çумĕнчи пуçламĕш парти организацийĕн пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура райком çекретарĕ Аниçимăв Й. ПСК(б)П райкомĕн çулталăк хушшинчи ĕçĕсем çинчен отчот туса пачĕ. Отчот тăрăх прениире 10 коммунис тухса калаçнă. Парти райкомĕ йалхуçалăхне йертсе пырас пирки чылай çитĕнӳсем тунă. Районри пумай колхозсене Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкинче пулма кандидата тăратнă. Йалхуçалăхĕнче стахановецсем, ударниксем йышланса пыраççĕ.

Парти ретне çĕнĕрен членсем илессипе чылай ĕçсем туса иртернĕ. Çулталăк хушшинче парти райкомĕ 19 çынна парти кандидатне илнĕ, 14 кандидата члена куçарнă. Нумайĕшне ответлă ĕçсенче ĕçлеме лартнă. Сăмахран, „Малала" колхоз председателĕ пулса ĕçленĕ Фролов комсомолец халĕ Осоавиахим райсоветĕн председателĕ пулса ĕçлет. Пашалукасси йалсовет председателĕ пулнă Орлов йулташ райĕçтăвкомĕн суту-илӳ уйрăмĕнче ĕçлет.

Бычковă йулташ, Атакай участкинче суйлав комиссиă председателĕн заместителĕ пулнăскер, халĕ Атакай йалсовет председателĕ пулса ĕçлет.

Угольникăв йулташ, 1934-мĕш çултанпа Мăн Сĕнтĕр йалсовет председателĕ пулса ĕçленĕскер, халĕ райĕçтăвкомăн суйлĕр уйрăмĕн пуçлăхĕ пулса ĕçлет. Йулашки вăхăтра Угольникăв йулташа парти кандидатне илнĕ.

Кандидатсемпе ĕçлесси партин йертсе пыракан органĕсен чи ответлă ĕçĕ пулмала. Анчах, ку ĕç пурнăçа вăрахăн кĕрсе пырать. Отчотра райком членĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене сахал кăтартса панă.

Бирӳков.

Суйлав умĕн

Агитаторсен çеминарĕ. Вăрман касакансемпе йухтаракансен профсойузĕн Вăрнар райкомĕ çак кунсенче РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кампанинче ĕçлекен агитаторсен виçĕ кунлăх çеминарне иртерчĕ. Çеминарта пулнă 25 çын халь выранĕсенче РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕренмели кружоксене йертсе пыраççĕ.

Н. Скворцов.

„Серп и Молот" савăтри (Мускав) ПСК(б)П Комитечĕн çекретарĕ А. И. Бубнăв йулташ (сылтăм йенчен) йертсе пыракан парти органĕсене суйлас йенĕпе савăтри цехсенчи парти комитечĕ çекретарĕсен, парторгсен тата пропагандиссен инструктивлă канашлуне иртерет.

В. Покровский фото-ӳкерчĕкĕнчен (Сойузфото).

Метикассинчи агитатăрсем

Иртнĕ суйлав вăхăтĕнче те, халĕ те агитатăр пулса ĕçлекен Степанăвă Наçтук ĕçĕсемпе чи малтанах „Иккĕмĕш пилĕкçуллăх" колхозри хисеплĕ карчăк Архипăвă Аннă паллаштарчĕ:

— Кружокра иртекен заньятисене çӳрейместĕп епĕ,—тет вăл.—Çапах суйлав саккунĕсене вĕренес пирки хам тантăшсенчен кайа йулмастăп.

— Заньятисене çӳремесĕрех вĕренетĕн-и?

— Вара çав. Çӳремесĕрех. Наçтук çӳрет ман патăма. Киле çӳрет. Вăл вĕрентет. Кружокра заньяти иртерет те вара, ман пата килсе кĕрет. Акă, кӳршĕри Йакур та кунта каçать (Çергейĕв Йегор). Вăл та ĕнтĕ, ман пекех ватă, 76 çулта. Малтанах Йакурпа иксĕмĕр те Наçтук каланине хăвăрттăнах ăнланаймастăмăр. Виçшер йе тăватшер сехет вăхăт иртеретчĕ вăл пирĕнпе. Халĕ аплах мар, часах ăнланатпăр. Ăнланайман ыйтусене çийĕнчех Наçтукран ыйтса пĕлетпĕр.

Архипăвă хăйне тăрăшса вĕрентекен Наçтук агитатăра саватать, унăн ĕçĕсене мухтать:

— Ывăнма та пĕлмест пуль. Пирĕнпе темиçе сехет хушши калаçса ларсан та, ывăнтăм тесе каламасть.

Чăнахах та РСФСР Верховнăй Советне суйламали Положенине вĕренмели кружокăн малтанхи заньятийĕ—государствă влаçĕн аслă органĕсен пулас суйлавĕсем çинчен ăнлантарас ыйту вăрăма тăсăлнă вĕсен. Вĕсем ку заньятине икĕ пайа уйăрнă. Иккĕмĕш пайĕнче пĕтĕмĕшпех географи карттипе усă курса РСФСР-не кĕрекен крайсем, облаçсем тата автономлă республиксемпе паллашнă.

— Пысăк та вĕт республикă!—тет Архипăвă.—Пĕтĕм çĕршывăмăрти халăхăн шучĕ 170 мĕлйун тетпĕр. Вăл шутран виçĕ пайран икĕ пайĕ РСФСР территорийĕ çинче пурăнать. Пысăк республика! Пуйан. Мĕн-мĕн кăна çук-ши!..

Ку сăмахсене каласа çĕршывăн аслăлăхĕпе, пуйанлăхĕпе, çĕршывăн хăватлăхĕпе мухтанса хĕпĕртет кинеми. Çав вăхăтрах вăл, ку сăмахсене каласа, агитатăр Наçтук сăмахĕсенчен мĕн ăнланса йулнине систерет.

Наçтук йертсе пыракан кружокра пурĕ 25 суйлавçă. Вĕсене Наçтук кашни пилĕк кунсерен пĕрре пухса заньяти иртерет. Çав вăхăтрах Наçтук, районри агитатăрсен курсĕнче вĕренсе килнĕренпе, „Иккĕмĕш пилĕкçуллăх" колхозри ытти агитатăрсен организатăрĕ пулса ĕçлет. Колхозра пурĕ 6 агитатăр. Вĕсем кашни заньяти иртерес умĕн пĕрле пухăнса Наçтукран консультаци илеççĕ. Дмитрийĕвă Йекатеринă, Николайĕв Афанаççи, Романăв Герман, Дмитрийĕв Петр—вĕсем пурте иртнĕ суйлавра палăрнă агитатăрсем.

—Массă йуратать вĕсене,—тет йалсовет председателĕ Капитонăв коммунис.—Агитатăрсен авторитечĕ хăпарнăçемĕн хăпарать. ССРС Верховнăй Советне суйланă чухне пирĕн йалсоветне кĕрекен суйлавçăсем 100 процентчĕпех суйлава хутшăннă. Пирĕн йалсовет суйлава отличнă иртернĕ тесе паллă тунăччĕ Трак райĕçтăвкомĕ. Çитес суйлавсене те çавнашкалах пысăк çитĕнӳсемпе иртерме пирĕн пур условисем те çителĕклĕ.

Капитонăв йулташ, граждăн вăрçин паттăрĕ, вăрçăра йăвăррăн аманнăскер, йал çамрăкĕсене активлатас тĕлĕшпе пур майсемпе те тăрăшса ĕçлет. Çак çулхине вăл çĕнĕрен 22 агитатăр вĕрентсе çитĕнтернĕ, вĕсенчен саккăрĕшĕ хĕрарăм—Наçтук тантăшĕсем.

— Вĕсем агитаци ĕçĕпе çеç мар, хуçалăхри ытти ĕçсенче те пример кăтартса пыраççĕ,—тет Капитонăв.—Пирĕн йалсовета пиллĕк колхоз кĕрет. Кăçалхи çуракине лайăххăн хатĕрленес ĕçре агитатăрсем чи малти вырăна йышăнса пычĕç. Пирĕн колхозсенче пĕр начар лаша та çук. Коньухсем пурте пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Ку ăмăртăва коньух-агитатăр П. Çеменăв йулташ пуçарса йачĕ. Клевĕр акса хăварас плана икĕ кун хушшинче пурнăçларăмăр. Апрелĕн 23-мĕшĕнче массăлă акана тухрăмăр. Агитатăрсем—акара. Кашни звенорах пур вĕсем.

Кантăрлахи кану вăхăтĕнче Кашни звенорах агитатăрсем политкалаçусем туса иртереççĕ. Тăван республĕксенче пуçланнă суйлав кампанийĕ мĕнле пысăк хавасланăхпа пынине хаçатсем тăрăх вуласа параççĕ, тĕнчери лару-тăрусемпе паллаштараççĕ.

Лайăх ĕçлекен агитатăрсене мухтана хушăра начартарах ĕçлекенсем çинче те кăтартса хăвармасăр иртме çук. Акă, И. Терентйĕв йулташ. Вăл Молатăв йачĕпе тăракан колхозри агитатăрсен организатăрĕ. Терентйĕв хăй кружокне кĕрекен суйлавçăсем хушшинче аванах ĕçлет пулин те, ытти агитатăрсене вăхăтра пулăшса пымасть. П. Оçипăвпа Г. Кондратйĕв агитатăрсем ку тарана çитсе пĕрер заньяти иртернĕ те, лăпланнă. Акă вăхăтĕнче ĕçлессине те маннă.

„Трактăр" колхозри комсорг Н. Йевгенийĕв хăйĕн организацинчи агитатăрсемпе питĕ те начар ĕçлет. Вăл хăйĕн обйазаннăçĕ çинче сӳреккĕн пăхни çинчен Павлăвă Ольгă, Григорйĕв Петр агитатăрсем сахал мар каланă. Çакăн хыççăн, критикăна йуратман комсорг, агитатăрсене курайми пулать, хупă пухусем туса тĕрлĕрен елеклĕ ыйтусем сӳтсе-йавать. Ку пухусене пĕр коммуниса та (çав шутрах парторг Капитонăв йулташа та) чĕнмест. Комсомола кĕмен çамрăксем хушшинче нимĕнле ĕç те тумасть Йевгенийĕв. Активис Терентйĕв Иван комсомол ретне кĕрессшĕн нумай тăрăшнă. Ăна комсорг ку ĕçре нимĕнле пулăшу та паман. Вара йулашкинчен Терентйĕв йулташ комсомол ретне кĕме тесе çырнă ыйтуне, колхоз çумĕнчи пуçламĕш организацинче пăхса тухмасăрах райкомола йанă.

Калас пулать, Трак райкомолĕ Йевгенийĕв йеверлĕ комсоргсен чиновникле йăлипе килĕшет пулас.

Асăннă çитменлĕхсем—пĕчĕк çитменлĕхсем мар. Вăл çитменлĕхсене халех пĕтересчĕ. Вара Метикассинчи лайăх ĕçлекен агитатăрсен авторитечĕ малашне татах та хăпарĕ, вĕсен ĕçĕ татах та ăнăçулăрах пулса пырĕ.

Митта П.

Тăрăшса ĕçлетĕп

ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн суйлав кампани вăхăтĕнче мана суйлавçăсене „ССР Сойузĕн Верховнăй Советне суйламали Положенине" вĕрентес тĕлĕшпе агитатăр пулма уйăрчĕç. Мана, çамрăк колхозникe, çакăн пек чаплă ĕç шанса панăшăн питех те хĕпĕртерĕм. Епĕ пĕр иккĕленсе тăмасăрах ĕçлеме тытăнтăм.

Йалсовет манăн ĕçе ырларĕ. Вăл халĕ мана РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене колхозниксемпе йединоличниксене вĕрентме хушрĕ. Епĕ хавасланса ĕçе тытăнтăм. Кружокра вĕренекенсем заньятисене пĕр сиктермесĕр çӳреççĕ, вĕсен активлăхĕ ӳссех пырать. Кружокра вĕреннĕ май вĕсем хăйсем те йалта агитаци ĕçне туса пыраççĕ, çуракине большевикла иртерессишĕн колхозра тăрăшса ĕçлеççĕ. РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕрентнĕ чух епĕ Сталинла Конституцине те вĕрентетĕп, географи карттипе тата „Наша родина", „СССР и страны капитализма", „Что дала Советская власть трудящимся" кĕнекесемпе те усă курса, колхозниксемпе йединоличниксене суйлав саккунĕ çинчен тĕплĕн ăнлантаратăп.

Кунпа пĕрлех Совет çĕршывĕнче тата Чăваш республикĕнче тунă пысăк çĕнтерӳсем çинчен каласа ăнлантаратăп. Епĕ хамăн кружокри суйлавçăсене РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали кун, ийунĕн 26-мĕшĕнче коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн, совет халăхĕн мухтавлă ывăлĕсемпе хĕрĕсемшĕн сасăлама хатĕрлетĕп. Хальхи вăхăтра епĕ тата колхозри çтена хаçачĕн редакторĕ пулса ĕçлетĕп.

Трак районĕнчи „Большевик" колхоз членĕ—Г. Борисăв.

Й. Левин

Социалисăм строителствин аслă программи

(В. И. Ленин „Совет влаçĕн черетри задачисем" çинчен çырни çирĕм çул тултарчĕ)

1918 çулти мартăн 12-мĕшĕнче совет правителстви Петроградран Мускава куçса пынă. Владимир Илйич Ленин Кремĕле вырнаçнă. Вăл „кавалерсен покойĕсенче" пурăннă. Март уйăхĕн вĕçĕнче кунта вăл „Совет влаçĕн черетри задачисем" [1]) йатлă статйа çырас тĕлĕшпе ĕçлеме тытăннă. Апрелĕн 28-че статйа „Правда" тата „Известия" хаçатсем çинче пичетленсе тухнă.

Çамрăк совет республикĕ умĕнче тăнă тĕп йăвăрлăхсене Ленин генилĕ витĕр курса уçса панă. Вăл Совет влаçне тĕреклетме, çĕршыва тытса тăма, социалисăм строителствине план тăрăх туса пыма хăйулă, аслă программă сарса йанă.

Ленин пĕтĕм вăйсене пухса пит хытă тăрăшма ыйтнă. Германипе килĕшӳ тунă хыççăн пулнă мирлĕ вăхăтла (передышкăла) тӳрех, çийĕнчех çĕршыв оборони валли выранĕсенче совет ĕçне анлăн сарса йама усă курма кирлĕ пулнă.

Совет влаçĕ кашни кун тĕреклене, обшчĕствăлă пурнăçăн мĕн пур выранĕсене ытларах та ытларах кĕрсе пынă. Национальнăçсен Халăх Комиссариачĕ Сталин йулташ алă пусса Хусан, Епхӳ, Оренбург, Йекатеринбург совечĕсене, Туркестан крайĕн Халăх Комиссарĕсен Советне тата ыттисене чĕнсе каланинче çав тапхăра пит тарăнăн характеристикă панă, Сталин йулташ çапла çырнă:

„Российăри революцин йулашки икĕ уйăхĕнчи аталанăвне, уйрăмах Германипе мир тунă хыççăнхи тата Российăри буржуалă контрреволюцине путарса лартнă хыççăнхи тапхăра, Российăра Совет влаçĕ çирĕпленнĕ тапхăр тесе тата пĕтсе пыракан социаллă-економикăлă стройа çĕнĕ социалисăмлă майпа план тăрăх улăштарса çĕнетессин пуçламĕшĕ тесе хакламa пулать.

Тĕп отраçлĕсенче суту-илӳ вăйланса пыни, банксене национализацилени, Халăх хуçалăх аслă совечĕн — социалисăмлă обшчĕствăна сывăх тăракан çак организацилĕ-йачейкăн — хăйĕн тĕрлĕрен йенĕпе пуйан ĕçĕ кунсерен сарăлса пыни, — çаксем ĕнтĕ пĕтĕмпех Совет влаçĕ обшчĕствăлă пурнăçăн выранĕсене тарăн кĕрсе вырнаçни çинчен калаççĕ.

Центрти влаç ĕнтĕ чăннипех ĕç массисенчен тухса çитĕннĕ халăх влаçĕ пулса тăчĕ. Çакăнта Совет влаçĕн вăйĕпе хăвачĕ..." [2]).

Тĕнче историнче чи малтанхи хут рабочи клас çĕршыва тытса тăрас задачă патне сывăх пычĕ. „Вуншар тата вуншар мĕлйун çынсен пурнăçĕн чи тарăн, економикăлă, никĕсĕсене çĕнĕле" организацилес тĕлĕшпе халех ĕçе тытăнмала пулнă. Çак задачăна, — ăна татса панă хыççăн „Российă советлă республикă çеç мар, тата социалисăмлă республикă пулса тăчĕ тесе калама йурĕччĕ, — Ленин чи йăвăр, анчах та чи пархатарлă задачă тесе каланă.

Унчухне çакăн пек пит пысăк проблемăна лартма мĕн чухлĕ ăс тата витĕр курни, мĕн чухлĕ çирĕплĕх тата паттăрла хăйулăх кирлĕ пулнă! Вăл вăхăтра çĕршывра граждăн вăрçи сарăлса пынă. Совет республикĕн пĕтĕм тĕнчери лару-тăрувĕ калама çук йăвăр пулнă. Кашни кун империалисăмлă государствăсен çарĕсем тапăнса килессипе хăратса тăнă. Апрелĕн 5-мĕшĕнче Владивостока Йапони десанчĕ анса йулнă, ун хыççăн — Англи десанчĕ. Нимĕссем Украинăна çарпа йышăнса пынă. Контрреволюцин хура вăйĕсем, интервентсемпе пĕрлешсе, рабочисемпе хресченсен республикипе çапăçăва тухма хатĕрленнĕ.

Совет влаçĕпе большевикла парти, рабочисемпе хресченсене социалисăмлă тăван çĕршыва хӳтĕлеме чĕнсе, Хĕрлĕ Çар тунă. Рабочисемпе хресченсем большевиксем чĕнсе каланине хĕрӳллĕн йышăнса илнĕ.

Социалисăмăн ылханлă тăшманĕсем—меншевиксемпе ес-ерсем вăрçăн троцкисла-бухаринла провокатăрĕсемпе пĕрле вăрçăра тăван çĕршыва çĕмĕрсе тăкмала тăвас тактикăна тытса пынă. „Сулахай коммуниссен" „Коммунист" йатлă журналĕнче апрелĕн 20-мĕшĕнче Совет влаçне çирĕплетмели ленинла сулйĕре ирсĕррĕн вăрçса çырнă статйа тухнă. Сулахай революцилĕ сăмахсемпе маскăланса, бухаринĕцсем, ес-ерсем тата меншевиксем чăннипе илсен советсен çамрăк республикине хирĕç тапăнса пыма империалиссем валли фронт уçса парасшăн пулнă. Вак-буржуалă стихийă шухăш-кăмăлне хута кĕрсе, вĕсем пĕтĕм халăх йенчен учотпа контроль тăвассине, йĕркелĕхпе дисциплинă тăвассине пур майсемпе те хирĕç тăнă. Ĕç дисциплинине çирĕплетессишĕн кĕрешессине „сулахай коммуниссем" „кайала пĕр пусăм" чакни пулать тесе провокаци тунă.

Большевикла парти çĕршывăн хуçалăх пурнăçĕнче йĕрке кӳме тытăнсан, бухаринĕцсем, меншевиксем, ес-ерсем йĕрĕнчĕклĕн çуйăхма пуçланă.

Нумай çулсем витĕр малала пăхса, Ленин: пĕтĕм халăх йенчен учотпа контроль тумасăр социалисăмлă государствăн ĕç тухмĕ, тесе çырнă, мĕншĕн тесен „социалисăмлă государствă производителлĕ потребителлĕ коммунăсен, хăйсен производствипе потреблениине тӳрĕ кăмăлпа шута илсе пыракан, ĕçе перекетлекен, унăн тухăçлăхне татти-сыпписĕр ӳстерсе пыракан тата çапла тунипе ĕç кунне талăкра çичĕ сехет таран, ултă сехет таран тата унтан та сахалраха хăвармали май туса парaкан коммунăсен йышĕ пек çеç шăтса тухма пултарать".

Ĕçсĕрлĕх вăл çул пысăк пулнă. Хуçалăх йухăннипе хапрăксемпе савăтсем чарăнса ларнă. Ĕçсĕрлĕхе пĕтермеле, промышлĕннăçпа транспăрт ĕçне йĕркелесе йамала, ĕç тухăçлăхне ӳстермеле, йĕркесĕрлĕхе, кахаллăха, хамăрăн организацилĕхсĕре пĕтермеле пулнă. Çак задачă парти Тĕпкомĕн 1918 çулхи майăн 1-мĕшне иртермели лозунгĕсенче палăрса тăнă. Лозунгсенчен пĕринче çаплах каланă: „Капиталиссене çĕнтерсе, епĕр хамăрăн организацилĕхсĕре çĕнтерме тивĕçлĕ —выçлăхпа ĕçсĕрлĕхрен хăтăлмали çăлăнăç çакăнта çеç".

Ленинăн вăл кунсенче рабочисемпе тата хресченсемпе пит нумай калаçма тивнĕ. Ĕçлеме пĕлменнийĕ, тĕттĕмлĕхе тата хуçалăх йенчен кайа йулнине вăл кашни утăмрах сăнанă. Рабочисен пĕр пайĕ ĕлĕкхи йалапа ĕç çине тĕмĕнле ылханлă йапала çине пăхнă пек пăхнă. Рабочисен —пĕтĕм халăх пурлăхĕн хуçисен — ĕç дисциплинине хăйсен çирĕплетме кирлине, унăн тухăçлăхне ӳстерме кирлине массăсем ăнланса илмен пулнă-ха.

„... Пĕтĕм пурлăх хысна аллинче тăрать. — тесе аса илтернĕ Ленин,—хысна вăл — Совет влаçĕ, ĕççыннисен ытларахăшĕн влаçĕ пулать те ĕнтĕ..."

Совет влаçĕн чи кирлĕ задачи выранне Ленин социалисăмлă пĕрлешӳлĕ пурнăç йĕркисене вĕрентессипе, ĕç çине социалисăмла пăхма вĕрентессине кăларса тăратать. „Укçа шутне йĕрклĕ тата тĕрĕс туса пыр, — тесе çырнă Ленин,— хуçалăха тирпейлĕ тытса пыр, ан кахаллан, ан вăрла, ĕçре чи çирĕп дисциплинăна пăхăн, — шăпах çак лозунгсем ĕнтĕ, буржуази хăй пуçпулса тăнине çакăн пек сăмахсемпе витсе пурăннă чухне революцилĕ пролетарисем тивĕçлипе тăрăхланă лозунгсем, хальхи вăхăтра, буржуазине çĕклесе çапнă хыççăн, хальхи тапхăрăн черетри тата тĕп лозунгсем пулса тăраççĕ".

Çĕнтернĕ рабочи клас умне çĕнĕ обшчĕствăлă стройа практикăра тăвас задачă пĕрремĕш хут тухса тăнă. Ленин: „Епĕр Российăна **çĕнсе илтĕмĕр** — пуйансенчен чухăнсем валли, експлуататăрсенчен ĕççыннисем валли. Пирĕн халь Российăна **тытса тăрас** пулать"—тесе çырнă.

Капиталисăм пек мар, тата çӳлĕрех обшчĕствăлă уклад тумашкăн ĕç тухăçлăхне ӳстерни кирлĕ, тесе паллă тунă Ленин. Вак буржуалă анархи стихийине пролетарилĕ дисциплинăлăх çĕнтерсе илмесĕр социалисăм ăнăçăвĕ çинчен ĕмĕтленмели те çук.

Ĕç тухăçлăхне хăпартни, — тенĕ Ленин, — чи малтанах шултра индустрин материаллă никĕсне тума, çунтармали йапаласен, тимĕр, машиностройени, хими промышлĕннăçĕн производствине вăйлатма кирлĕ. Брестра тунă йăвăр килĕшӳ хыççăн та Российăн Уралра тимĕр тăприн пит пысăк запасĕсем пур, Хĕвеланăç Çĕпĕрте — çĕркăмрăк, Кавказра тата кăнтăр-хĕвелтухăçĕнче — нефт, центрта — торф запасĕсем пур. Унăн калама çук пуйан вăрмансем, шыв ресурсисем, хими промышлĕннăçĕ валли чĕртаварсем т. ыт. те нумай. „Çут-çанталăкăн çак пуйанлăхĕсене вĕрçĕнĕ техникă мелĕсемпе ĕçлесе усă курни производителлĕ вăйсене халиччен курманла вăйлатма никĕс туса парассине" Ленин унчухне малтанах курса тăнă. Аслă революци çулпуçĕ, тĕнчипе чи пирвайхи социалисăмлă государствăн руководителĕ Ленин унăн ученикĕ тата соратникĕ—Сталин йулташ аслăн йертсе пынипе икĕ пилĕкçуллăхсенче çав тери пысăк талкăшпа пурнăça кĕртсе çитернине малтанах каласа хунă, халь ĕнтĕ вăл пирĕн çĕршывра татах пысăк сулăмпа вăйланса пырать.

Ленин çапла тума сĕннĕ: „чăн-чăн организатăрсене, урă ăс-тăнлă тата практикăра тавçăракан çынсене, социалисăма парăннине совет организацисенче нумай çынсен çирĕп тата пĕрлехи тимлĕ ĕçне шавсăр (пăтранса кайнине тата шава пăхмасăрах) йĕркелесе йама пĕлнипе çыхăнтаракан çынсене йепле пулсан та асăрханарах тата чăтăмлăрах тĕрĕслесе пĕлсе пымала. Çавăн пек çынсене кăна, вунă хут тĕрĕслесе пăхнă хыççăн, вĕсене çăмăл задачăсенчен йăвăррисем патне куçарса пырса, халăх ĕçĕн руководителĕсен, управлени руководителĕсен ответлă выранĕсене лартмала".

Халăх хушшинче организатăрлă талантсем — массипех,—тесе çирĕплетнĕ Владимир Илйич. Вĕсене, çав талантсене, капитал хĕстерсе лапчăтса тăнă. Вĕсене тупма пĕлес пулать, хавхалантарас пулать, ура çине тăратмала, халăх ĕçĕн руководителĕсен ответлă выранĕсене лартмала. „Епĕр çакна тума вĕренеймен-ха. Епĕр çакна вĕренсе çитĕпĕр". Массăсене тарăнăн пĕлекен, вĕсен творчĕствăлă пултарулăхне ĕненекен Ленин çакна ĕненсе тăнă.

Халь ĕнтĕ, пирĕн патăрта социалисăм йăлана кĕрсе çитнĕ чухне, стахановла йухăм хăватлă халăх хумĕ пек пĕтĕм çĕршывĕпе çĕкленсе кайнă чухне, пиншер, вуншар пин талантсем, халăхран тухнă çынсем йертсе пыракан выранĕсене пынă чухне, Ленин малтанах курса тăнă аслă ĕçсем чăн-чăн пурнăçа кĕчĕç, совет стройĕн, совет организацин хăватне çирĕппĕн ĕнентерсе тăраççĕ.

Социалисăм чи çӳлĕ ĕç тухăçлăхĕ патне малала ăнланулăн та массăлăн кайма хушать. „Социалисăм çеç, классене пĕтерсе тата, çавăн пекех, массăсене пусмăрлассине пĕтерсе, чăн-чăн массăлă талкăшпа ăмăртма пуçласа çул уçса парать"—тесе çырнă Ленин.

„Буржуалă обшчĕствăн моçкисем" (меншевиксемпе ес-ерсене Ленин çапла каланă) бухаринĕçсемпе тата троцкиссемпе пĕрле Совет влаçне хирĕç загăвăрсемпе восстанисем организациленĕ. Експлоататăрсене çĕмĕрсе тăкнă, анчах тĕппипех пĕтереймен. Кивĕ обшчĕствăн пăсăлса кайнă елеменчĕсем преступленисене, спекуляцисене, взяткă илессине, хулиганла ĕçсене пумайлатнипе „хăйсене кăтартнă". Çакна йĕркелесе йарас пулсан, **тимĕр алă**, пролетариатăн хăватлă диктатури кирлĕ пулнă,—тесе

[1]) В. И. Ленин. Сочинения. Том XXII. Стр. 435—468

[2]) В. И. Ленин и И. В. Сталин. О советской Конституции. Партиздат. 1936, Стр. 285.

1938 ÇУЛХИ ÇУРАКИ

Республикăра 12.536 гектар тĕштырă акнă

Апрелĕн 25-мĕшне Чăваш республикинче 43.574 гектар клевĕр акса пĕтернĕ, 76,4 процент тултарнă. Тĕштырăсене 12.536 гектар çине акнă. Апрелĕн 25-мĕштĕлне Шупашкар, Йĕтĕрне, Тутаркас, Ишлей, Канаш районĕсем-сĕр пуçне ытти районсем пурте тĕштырăсене акма тухнă.

Патăрьел районĕ апрелĕн 25-мĕшне 2.674 гектар, Шăнкăртам районĕ 2.195 гектар, Йĕлчĕк районĕ 2.393 гектар тĕштырă акнă.

Ĕç нормисене тултарса пыраççĕ

КУСЛАВККА. (Телефонпа). МТС трактăрĕсем пурте колхозсен уйĕнчи хирсенче хĕрсех ĕçлеççĕ. Çуракин малтанхи кунĕнчех трактăрисем пысăк тĕслĕхсем кăтартрĕç. Виççĕмĕш бригадăри Бешенăв трактăрис апрелĕн 22-мĕшĕнче „СТЗ“ трактăрпа 9,48 гектар сухаланă, çунтармалине 24 килограм перекетленĕ.

Тăххăрмĕш бригадăри Иванова Абакумăвă трактăриссем çменăра 7,5-шер гектар сухалаççĕ. Тăххăрмĕш бригадăн бригадирĕ Ишанăв йулташ 7-мĕш çул трактăрисре ĕçлет. Вăл çамрăк трактăрисене ĕçре йăланах пулăшса, вĕрентсе пырать.

Çуракин малтанхи кунĕнче, лайăх тĕслĕхсемпе пĕрлех, çитменлĕхсем те палăрчĕç. Чĕнкассинчи Калинин йачĕпе тăракан колхоз трактăрĕсемпе сухалама чи кайран писсе çитекен çĕр участăкĕсене уйăрса панă. Вунтăваттăмĕш бригада апрелĕн 24-мĕшĕнче трактăрсемпе уйа тухса пăхнă. Çĕр çав тери чĕрĕ пулнă, сухалама май килмен. Çакăн хыççăн Матвеĕвĕн бригадир трактăрисене пурне те виçĕ кунлăха киле йанă.

Пăрмас колхозĕнче те трактăрсен 8-мĕш бригадăн бригадирĕ Антонăв çĕр сухалама тачка пулни пирки трактăрисене киле йанă. Колхозсен трактăриссене стахановла ĕçлеме лайăх майсем туса парасси çине сиĕлтен пăхаççĕ. Акă, Енĕлĕс йачĕпе тăракан колхозăн трактăриссен 9-мĕш бригади вальçи стан туса памала пулнă, анчах йна халĕ те туса паман.

Трактăр бригадисенче, çавнашкалах колхозсенчи бригадăсенче куљтмассăлă ĕçе тивĕçлипе пуçарса пыни çук. Çтена хаçачĕсем вăхăтра тухса тăмаççĕ.

М. Митрофанăв.

Май уйăвĕ умĕнхи ăмăрту саралат

ВАРНАР. (Телефонпа). Районри пур колхозсем те çуракичĕ хĕрсе ĕçлеççĕ. Нумай колхозсем Май уйавне çуракине пĕтернипе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ. Ку тĕлĕшпе Колљовни Сталин йачĕпе тăракан, Çĕнĕ Йахкассинчи Сталин йачĕпе тăракан колхозсем социалисăмла ăмăртăва анлăн сарса пыраççĕ. Колљовни колхозне пĕтĕмпех йаровизациленĕ вăрлăхпа акса хăвараççĕ. Апрелĕн 26-мĕшне кунта 200 гектар ытларах акнă. Çĕнĕ Йахкассинчи колхозра та агротехника ĕçĕсене тĕрĕс пăхăнса ĕçлеççĕ. Çак колхозсем апрелĕн 29-мĕшне тĕштырăсене акса пĕтерессĕ.

Районри колхозсем апрелĕн 26-мĕшĕ тĕлне 2.184 гектар сухаланă. Вăл шутран 1279 гектар çинче йаровизациленĕ вăрлăхсемпе акса хăварнă.

Райçĕрç пайĕн пуçлăхĕ — **Г. Çмирнов.**

2.254 гектар сухаланă

ТРАК. (Телефонпа). Апрелĕн 26-мĕшне районри 100 колхозран 85 колхозра çуртырриссем акма тухнă. Ку вăхăт тĕлне районĕпе 2.254 гектар сухаланă, вăл шутран 967 гектар йаровизациленĕ вăрлăхсемпе акнă.

План тăрăх, вăрлăхсене 4.500 центнер йаровизацилесе акмала. Апрелĕн 26-мĕшĕ тĕлне 2.302 центнĕр йаровизациленĕ.

Колхозсене кĕр калчисене çÿрĕлессипе апат парасси кайа йулса пырат. Ку вăхăтчен кĕр калчисене 712 гектар çеç çÿреленĕ, 580 гектар кăна апат панă.

Уйрăм колхозсем çуракине кĕске срукрах пысăк пахалăхпа иртерессишĕн кĕрешеççĕ. Акă, Карай йалсоветне кĕрекен „Хĕрлĕ çăлтăр“, „Бољшевик“ колхозсем çуракин ĕçне аван туса пыраççĕ. „Бољшевик“ колхоз акана тухнă кунах 55 гектар, „Хĕрлĕ çăлтăр“ колхоз 33 гектар сухаланă. „Бољшевик“ колхозри Г. Тиханăв колхозник сухалас нормăна кулленех 150 процент таран тултарса пырат.

Уйпри „Коминтерн“ колхоз çуракине апрелĕн 29-мĕшĕнче туса пĕтерессишĕн кĕрешет. Ку колхозра колхозниксем ăмăртса ĕçлессине аван пуçарса йанă. Никифарăв колхозник 11 ретлĕ сейалкăпа кашни кунах 6—7 гектар акса пырат.

Районра çуракине начар хатĕрленсе тухнă колхозсем те пур. „Пчелкино“ колхозăн çуракине тухнă чух хăмăтсем йусавсăр пулнă. Çавна пула малтанхи кунах хăмăт тивнипе икĕ лаша ĕçлеме йурăхсăра тухнă.

Ив. Хатайевский.

Шкулсенче

■■ 205 çын ГСО значокĕн нормине панă. Çĕрпÿ хулинче май уйавне хатĕрленсе 205 вĕренекен ГСО значокĕн пĕрремĕш сыпăк нормине панă. Вĕсенчен: фељдшĕрсен шкулĕнче 74, педагогикă училищинче 110 вĕренекен нормă панă. Кунсăр пуçне фељдшĕрсен шкулĕнче III-мĕш курсра вĕренекен 60 студент ГСО значокĕн II-ш сыпăк нормине пачĕç.

А. Михайлăв.

■■ „Отлично“ тата „хорошо“ вĕреннипе кĕтсе илеççĕ. Авăспÿрт Кипечри (Шахасан районĕ) вăтам шкулта вĕренекенсем май уйавне „отлично“ тата „хорошо“ паллăсемпе вĕренме ăмăрту сарса йанипе кĕтсе илеççĕ. Шкулти тата отрадри çтена хаçачĕсем ăмăрту мĕнле саралса пыни çинчен йĕркелĕн çутатса тăраççĕ. Майăн 1-ш тĕлне „Отличник“ йатлă илемлĕ литературă журналĕ кăлараççĕ. Унта ачаçем хăйсем çырнă калавсемпе сăвăсем пичетленеççĕ.

С. Исфимăв.

★ **Çĕнĕ клуб.** Мăн Йавăшри (Хĕрлĕ Чутай р.) Сталин йачĕпе тăракан колхоз хулăнса ларакан чиркÿрен клуб туса хатĕрет. Вăл клуб 500 çын вырнаçмалăх пулат. Ăна май уйавĕн кунĕнче уçаççĕ.

Ф. Семенăв.

Колхозниксемпе колхозницăсем, агрономсем тата совхозсенчи работниксем! Çуракине кăтартулă ирттерессишĕн, вăйлă тырпулшăн кĕрешĕр! Сывă пултăр колхозсемпе колхозниксен пуйан та куљтуралă пурнăçĕ!

(ПСК(б)П Тĕпкомĕ 1938 çулхи Майăн 1-мĕшне ирттерме панă лозунгсенчен)

Апрел уйăх планне тултарнă

Чăваш Тĕпĕçтăвкомĕ çумĕнчи Деткомиссçи хапрăкĕсем май уйавне апрел уйăх планне 150 процентран кайа мар тултарнипе кĕтсе илме обйазатĕлства илнĕ.

Илнĕ обйазатĕлствăна хапрăксем ăнăçлăн тултарса пыраççĕ. Апрелĕн 21-мĕшне хапрăксем уйăх планне 101 процент тултарчĕç.

Деткомиссçин Шупашкарти хапрăкĕ малта пырат, вăл апрелĕн 21-мĕшне уйăхри плана 113 процент тултарнă. Хапрăкри стахановçсем Спирин, Çмирнов, Сорокина, Долгорукăвă йулташсем уйăх планесене 150 процентшер ытла пурнăçланă. Хапрăкри рабочисем уйăх планне 170 процентран кайа мар тултарассишĕн кĕрешеççĕ.

В. Йакăвлĕв.

Шупашкарти предприйатисем тăрăх

500 пин кирпĕч

Кирпĕч савăтĕнчи комсомолĕçсем май уйавĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса хăйсем çине 500 пин штук кирпĕч туса кăларма илнĕ обйазатĕлствăна ытти рабочисем те хавасăхпа йышăнчĕç. Халхи вăхăтра савăтра 2 пресс ĕçлет. Бригадăпа бригадă ăмăртса ĕçлеççĕ.

Павлăвăн çĕнĕ çитĕнĕвĕсем

Водопйанăв йачĕпе тăракан тир-сăран савăтĕнчи комсомолĕн Николай Павлăв йулашки вăхăтра лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеме пуçларĕ. Апрелĕн 22-мĕшĕнче вăл плана 145,5 процент тултарнă пулсан, апрелĕн 23—25-мĕшсенче 4 операцилĕ ĕçре ĕçлесе нормăна 255,5 процент тултарчĕ.

Май уйавне тата çĕнĕ çитĕнÿ тунипе кĕтсе илессишĕн кĕрешет.

И. Федăрăв.

Бригадăсем ăмăртаççĕ.

Спирт савăтĕнчи Пегайĕвă, Васильĕвă тата Богданăвă йулташсен бригадисем май уйавĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса уйава çитĕнÿсемпе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ. Апрелĕн 23-мĕшĕнче плана Васильĕвă йулташ бригади 115 процент, Богданăвă йулташ бригади 121 процент тата Пегайĕвă бригади 147 процент тултарчĕç.

Апрелĕн 25-мĕшĕнче ку бригадăсем тата лайăхрах ĕçлерĕç. Малта пыракан Пегайĕвă бригади çак кун плана 140 процент, Богданăвă бригади 129,7 процент тултарчĕç.

Х. Л.

Хавасăхпа

★ **Çĕнĕ йурăсемпе кĕтсе илеççĕ.** Шупашкарти педрабфакра вĕренекенсем май уйавне çĕнĕ йурăсем вĕренсе илеççĕ. Вĕсем: „Москва“, „Конармейская“, „Если завтра война“, „Песня о Сталине“, „Песня о родине“ йурăсене вĕренчĕ. Çавнашкалах май уйавне хатĕрленсе вĕренÿре социалисăмла ăмăртăва сарса йанă.

Ф. Галкин.

★ **Ĕç тухăçлăхне хăпартаççĕ.** Елĕкри сыхăну кантурĕнче ĕçлекенсем май уйавне хатĕрленсе, ĕç тухăçне хăпартса ĕçлеме обйазатĕлства илчĕç. Радиоточкăсене пăхса тăракан Лукин й. май уйавĕн кунĕнче районри пур колхозсенче радиоприйомниксене те ĕçлеттерсе тума тăрăшат. Пайанхи куна вăл 56 радиоприйомнике техника йенчен пăхса тухма договăр тунă, тата тепĕр 25 прийомнике пăхса тăма договăр тăват. Арсентĕвĕн телеграфис телеграммăсене пĕр йăнăшсăр йышăнса вăхăтра çитерме пулчĕ.

Быкăв, Муратăвă, Широкăвă тата Çемонăвă телефонискăсем те лайăх ĕçлеме пуçларĕç.

ССР Союзĕн Верховнăй Советне суйлана чухне лайăх ĕçленĕ почтальонсем малашне те тата лайăхрах ĕçлеме пулчĕç.

Сыхăну кантурĕ ССР Союзĕн Верховнăй Советне суйлана вăхăтра лайăх ĕçленĕ сынсене — Ландышевăпа Матвеĕвĕн йулташсене 110-шар тенкĕ, Федотăв йулташа 90 тенкĕ, Порфирйевăпа Алексеĕвă йулташсене 50-шер тенкĕ премий пачĕ.

В. Иофремăв.

Мала тухрĕ

ÇЕМĔРЛЕ. „Бољшевик“ савăтра май уйавĕ умĕнхи ăмăрту саралсах пырат. Йулашки вунă кунлăхра Таракан йулташ йертсе пыракан 4-мĕш бригада мала тухрĕ. Ку бригада вунă кунхи плана 220 процент тултарнă.

Апрелĕн 19-мĕшĕнче 2-мĕш бригада (смена мастарĕ Воронцов йулташ) пĕр кунхи плана 125,7 процент тултарса çĕнĕ çитĕнÿ турĕ.

Н. Иваницкий.

Çаврăнăçусăр ĕçлекенсем

Канашра Шупашкар хушшинчи чукун çул строительствинче ĕçлекен рабочисем пурте пĕр шухăшпа, Майăн 1-мĕшне ăнăн хывса пĕтернипе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ. Малта пыракан С. Тарасĕв, Рубцова йулташсен бригадисем тунă çитĕнÿсене чăкармасăр маттуран ĕçлесе пыраççĕ. Строительствăри рабочисен ĕçри хастарлăхне пысăк. Анчах çак хастарлăха хуçалăхстĕнниксем мĕнле сарса, вăйлатса пыраççĕ-ха? Тÿрех каламала, çителĕксĕр. Хуçалăхстĕнниксем рабочисен çемйисене шута илмесçĕ. Пухусенче час-часах столовăй, ларйоксем начар ĕçлени çинчен калаççĕ, ăна йусама сĕнсем пыраççĕ. Анчах ĕç йусанни курăнмаçт. Столовăйĕнче апат пахалăхĕ начар, посудăсем çитемĕсĕр, пĕтĕм столовăйĕпе те 10 кашăк, 7—8 стакан, 10—12 тарелкă çеç.

Çăкăр турттарса пырассине те йĕркелемен. Хăшпĕр чухне çăкăра кăнтăрла иртсен 3 сехетре çеç илсе пыраççĕ.

Рабочисен кану вăхăтне те кирлĕ пек организацилемен. Общежитинче хаçат-журналсем, шашкă,-шахмăтсем сахал. Клуб йаланах хупă.

С. Савелйĕв.

Ăмăртура малта пыракансем

КАНАШ. Вакунсем йусакан савăтри инструменталнăй цехра ĕçлекенсенчен 95 проценте социалисăмла ăмăртăва хăвартарнă. Ăмăрту ĕçне сарса пынă май стахановецсен хисепĕ ÿссех пырат. Ку йухăм уйрăмăнах май уйавне хатĕрленнĕ вăхăтра хăвăрттăн саралса пыни курăнат.

Цехри стахановецсем: Иванов (слесар) март уйăх планне 250,8 процент, Калашникăв (токар) 245,2 процент, Никитин (слесар) 244,6 процент, Зуйĕв 241,7 процент тултарчĕç. Халĕ çак йулташсем апрел уйăхĕнчи плана татах та ытларах тултарассишĕн пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Анчах хăварт касакан, çирĕп хурçă çителĕксĕрри час-часах рабочисене простой тутарат, нефт, чĕн таврашĕсем те йаланах пулмаççĕ. Ку тĕлĕшпе уйрăмăнах техснаб уйрăмĕ начар ĕçлет.

Рабочисем цех администрацинчен снабжени уйрăмĕн ĕçне лайăхлатма ыйтаççĕ.

Портнов.

Май уйăхĕнче Совет Союзĕ литературăлă паха памйатникĕ—„Слово о полку Игореве“ произведени 750 çул тултарнине паллă тăват.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Зичи художникăн „Слово о полку Игореве“ произведенин Николай—Гербел куçарса 1854 çулта кăларнă кĕнекери иллустрацийĕ (1853 ç.).

Союзфото репродукцийĕ.

палла тунă Ленин. Пролетари диктатурине çирĕплетес ыйтăва Ленин тĕплĕн хатĕрленĕ.

„Совет влаçĕн черетри задачисем“ статйара Ленин социалисăмлă демократине классикла характеристикă панă, вăл демократи пролетариат гегемонине (йертсе пырассине), çĕршыва тытса тăнă çĕре пĕтĕм халăха хутшăнтармала тăват. Çĕршыва тытса тăма чăннипех пĕтĕм халăх вĕрентĕр тата çĕршыва тытса тăма пуçлатăр тесе, вăл татăклă çулсем палăртса панă.

„Сулахай“ ес-ерсем, „сулахай коммуниссем“ Ленин кăларса тăратнă положенисене хирĕç тăнă. „Сулахай“ ес-ерсемпе „сулахай коммуниссем“ тытамакла çухăраннин сăлтавне тăрă шыв çине кăларса, Ленин çакăн пек мăшкăласа кулса çырнă: „Çавнашкал типсен социалла çăлкуçĕ, вăл—вăрçă хăрушлăхĕсенчен, сасартăк йуХăннинчен урса кайнă пĕчĕк хуçа...“

Унăн йертсе пыракан вăйне Ленин ĕненнĕ клас вăл пролетариат пулнă.

„Ĕççыннисене тата експлуатациленекен массăсене йертсе пыма хăйĕн çулĕпе пăркаланмасăр пыракан клас, чи кансĕр, йăвăр тата хăрушă тапхăрсенче пуçа усман тата шанчăка çухатман клас çеç пултарат. Пире тытамакла хыпăнса ÿкнисем кирлĕ мар. Пире пролетариатăн тимĕр батаљйонĕсем йĕркелĕн утса пыни кирлĕ“.

„Совет влаçĕн черетри задачисем“ статйа çакăн пек сăмахсемпе вĕçленнĕ. Ăна пичетлесе кăларнă хыççăн тепĕр кунне, апрелĕн 29-мĕшĕнче, Владимир Илйич Пĕтĕм Российă Тĕпĕçтăвкомĕн ларăвĕнче доклад туса панă. Мускаври актив Совет влаçĕн черетри задачисем çинчен Ленин тунă доклада итлеме пултартăр тесе, Пĕтĕм Российă Тĕпĕçтăвкомĕн ларăвĕ Политикăлă музейре пулса иртнĕ.

Лару каçхине 10 сехетре уçăлнă. Массăсем тăван Илйича тăвăллă оваци туса кĕтсе илнĕ. Ленин сехет çурăна йахăн каланă. Хĕрÿлĕ, хумханулă сăмахĕнче вăл рабочи класа сутакансене—Бухаринпа унăн „сулахай коммуниссен“ ушкăнне тата „сулахай“ ес-ерсене пĕтерсе тăкмалах критикленĕ. Ленин пирĕн революцин уйрăмлăхĕсем çинчен, вакбуржуалă çĕршыври социалисăм строитĕлстви умĕнче тăракан йăвăрлăхсем çинчен каланă.

Доклад тăрăх пренисенче тухса калаçнă ытти сынсем хушшинче тăван çĕршыва пăрахса тăшмана сутăннă Бухарин, „сулахай“ ес-ерсенчен Карелин, меншевиксенчен Мартăв тухса калаçнă. Социалисăмлă революцине сутакансен çак мĕн пур урса кайнă йытушкăнĕ Совет влаçĕн черетри задачисем çинчен статйара тата докладра Ленин кăларса тăратнă тезиссем çине хыттăн тапăннă. Халь ĕнтĕ паллă, Бухаринпа Карелин выступленийĕсене килĕштерсе тунă пулнă. Пĕтĕм Российă Тĕпĕçтăвкомĕн ларăвĕ пĕтнĕ хыççăн Бухаринпа Карелин хушшинче вăрттăн калаçу пулса иртнĕ. Совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блок“ процесĕнче çакна палăртса çирĕплетнĕ: Карелинпа Бухарин хушшинче çавăн пек калаçу пынă вăхăтра Бухарин Ленина, Сталина тата Свердлăва ирĕксĕрлесе вĕлересси умĕнче те чарăнса тăмасăр, Совет влаçне хирĕç тÿрех кĕрешме ыйтнă.

Бухаринла тата сулахай-ес-ерла сутăнчăксене çĕмĕрсе тăкса çапса салатнă. Майăн 3-мĕшĕнче парти Тĕпкомĕн ларăвĕнче Ленин докладне пурте пĕр сасăпах йышăннă. „Совет влаçĕн черетри задачисем çинчен çырнă тезиссене“ пичетлесе кăларнă, совет государстви нумай çулсем хушши çав тезиссем тăрăх ĕçлесе пынă.

Коммунисăмăн генилĕ çулпуçĕ Владимир Илйич Ленин çирĕм çул кайала каланисенчен нумайĕшĕ пайанхи кунччĕнех хăйĕн çивĕчлĕхне тата пысăк вырăнне çухатмасăр сыхланса усранаççĕ. Ленинăн „Совет влаçĕн черетри задачисем“ йатлă ĕçĕ марксисăм пуйанлăхне çĕнтернĕ пролетариат вальли классикла программăлă документ пек, социалисăм строитĕлствин программăлă документĕ пек кĕрсе йулчĕ.

Аслă полководĕц

(М. И. Голенищĕв-Кутузăв вилни 125 çул тултарнă тĕле)

Российăн историйĕ сахал мар полководĕцсене пĕлет, вĕсен таланчĕпе паттăрлăхне пула çеç пирĕн тăван çĕршыв ытти çĕршывсене пăхăнмала мар пулса, тĕрĕс-тĕкел йулнă.

1240 çулта Новгород кљаçĕ Александр Нева щывĕ тинĕсе йухса тухнă вырăнта пирĕн çĕр çине тапăнса кĕнĕ шведсене çĕнтернĕ, тепĕр икĕ çултан вăл Чудск кÿлли çинче (Пăр çинчи çапăçу) нимĕçсен Ливонск орденĕн рыцарĕсене çĕмĕрсе тăкнă.

1378 çулта Мускав кљаçĕ Дмитрий Рйазањ çывăхĕнчи Вожă йуханшыв патĕнче тутарсен Мамай йатлă ханне çĕмĕрсе тăкнă, унăн çарĕсене вăл тепĕр икĕ çултан, Дона йухса кĕрекен Непрйадвă йатлă йуханшыв çывăхĕнче пулса иртнĕ çапăçура та çĕмĕрнĕ.

1612 ç. войеводă Пожарский кљаçпа Чулхула граждаНинĕ Минин Пољшă интервенчĕсене Мускавран сирпĕтсе кăларса, кайарахпа вĕсене пирĕн çĕршывран йăлтах хăваласа йанă. Çавăн пекех 1709 çулта пĕрремĕш Петр Полтавă çывăхĕнче шведсен королне—XII-мĕш Карла çĕнтернĕ.

Çакă çĕнтерÿсем пурте пирĕн çĕршыв çине тапăнакансене ăна хăйсен аллине çавăрса илме шутлакансене пирĕн халăх йаланах çирĕп отпор панине кăтартса параççĕ.

1812 çулта, пирĕн çĕршыв çине тĕнчери чи пысăк çĕнтерÿçĕсенчен пĕри Наполеон тапăнса кĕрсен, Российăна калама çук пысăк хăрушлăх çавăрса илнĕ. Ку авантÿрă Наполеоншăн ăнăçсăр пулни аслă полководĕцăн — Михаил Илларионăвич Голенищĕв-Кутузăв кљаçăн йачĕпе сыхăннă.

Кутузăв 1745 çулта çуралнă. Унăн ашшĕ хăйĕн службине пĕрремĕш Петр чухнех пуçланă, вăл генерал-поручик пулнă. Кутузăв çамрăклах амăшĕсĕр тăрса йулнă, ăна асламăшĕ пăхса ÿстернĕ. Пурне те пĕлме йуратакан ача карчăк каласа паракан калавсемпе йумахсене итлеме йуратнă. Ун пек чухне вăл вăйă çинчен те, çыврасси çинчен те маннă.

Малтанхи çар пĕлĕвне Кутузăв артиллери инженерĕсене хатĕрлекен шкулта илнĕ. Ăнăçлăн вĕреннĕшĕн ăна шкул çумĕнчех учителсене пулăшма хăварнă. Ăна панă ĕнентерÿ çине çапла çырнă: „Математикă наукисĕр пуçне прапорщик Михаил Кутузăв (ун чухне вăл 15 çулта çеç пулнă) нимĕçпе француз чĕлхисене аван пĕлет тата латин чĕлхипе çырнине те ăнланат“.

Кутузăвăн паттăр пурнăçĕ 1770 çулта пуçланат, темĕн чухлĕ çĕнтерÿ тăват вăл. Турципе Российă хушшинче пулнă вăрçăра, Ларгăпа Кагул хушшинче пулса иртнĕ çапăçура паттăрлăхпа палăрнăшăн Кутузăва капитанран тÿрех премйер-майора, унтан часах подполковнике куçарнă.

Крыма çĕнтерсе илнĕ чухне (1773) Алуштă çывăхĕнчи çапăçура Кутузăв йăвăр аманнă. Пуљă сулахай ăнлавран кĕрсе сылтăм куç патĕнчен тухса кайнă. Вăл çак йăвăр чиртен сывалнинчен, хăрах куçсăр çеç пулса йулнинчен врачсем те тĕлĕннĕ.

Очакова илнĕ вăхăтра вăл каллех йăвăр аманнă. Пуљă питрен лексе ĕнсерен тухса кайнă. Медиксем ку хутра та Кутузăв вилет тесе шутланă, анчах вĕсем йăнăшнă. Кутузăв сывалнă.

„Хамăр курман пулсан,—тенĕ Массет тухтăр,—кун çинчен каланине йумах вырăнне çеç шутламалаччĕ. Вăл çакăн пек икĕ йăвăр суранран сывалчĕ пулсан, Кутузăва кунçул темле тĕлĕнмеле çĕнтерÿ вальљи сыхласа тăрат пулĕ“.

Державин поет та, çав шухăшах çирĕплетсе, çапла каланă:

Ун пуçĕ витĕр вилĕм тухнă,
Анчах çапах вăл чĕрĕ йулнă.

1789—90 çулсенче Кутузăв генилĕ Суворăв йертсе пынипе ĕçленĕ. Суворăв Кутузăва пысăк хак панă.

Турксен Измаил крепăçне икĕ хутчен штурмланă хыççăн, Кутузăв Суворăв патне крепĕçе илме май çукки çинчен пĕлтернĕ.

„Калăр ăна: епĕ Измаила çĕнтерсе илнĕ тесе тата Кутузăва коменданта лартатăп тесе—Петербурга пĕлтернĕ“, — ответленĕ Суворăв.

Çакăн хыççăн Кутузăв тапăнăва вăйлатса крепăçе кĕрсе кайнă.

Измаила илсен, вăл Суворăвран унăн çĕнтерÿ пулма пултарайманни çинчен пĕлтернине хирĕç панă отвечĕ мĕне пĕлтернине ыйтнă.

„Аптрамаст!—тенĕ Суворăв.—Кутузăв Суворăва пĕлет, Суворăв та Кутузăва пĕлет. Измаила илеймен пулсан, унăн хÿмисем патĕнче Суворăв та, Кутузăв та вилнĕ пулĕччĕç“.

Суворăв, хăйпе пĕрле ĕçлекенĕн паттăрлăхĕ çинчен пĕлтерсе, çапла çырнă: „Кутузăв вăрçă искусствин çĕнĕ опычĕсене тата хăйĕн паттăрлăхне кăтартрĕ вăл манăн сулахай аллăра пырса, сылтăмалă пулса тăчĕ“.

Иккĕмĕш Кĕтерне патша паттăр Кутузăва Финљанди çар командуйущийĕ тата кадетсен корпусĕн директăрĕ туса хунă. Кадетсен корпусĕнче те Кутузăв çĕнĕ ĕçе часах ăнкарса илет. Кунĕ-кунĕпех унта пурăннă. Вăл тактикăна тата вăрçăсен историне хăй вĕрентнĕ. Пĕлÿсене тĕрĕслене чухне тимлĕ пулнă. Вĕренекенсен характĕрлĕ йенĕсене часах курнă, пултарулисене часах пысăкрах чина куçарса ÿстерсе пынă.

Пĕрремĕш Павăл чухне Петербург çывăхĕнче Кутузăв йертсе пынипе пулса иртнĕ маневăрта:

— Кутузăв пек генералпа Российă ырă-сывах пулĕ, тенĕ.

Кутузăв çинчен Пĕрремĕш Александр Австрипе пĕрле Францине хирĕç пĕрремĕш вăрçă пуçласан, 1805 çулта тин аса илнĕ.

Кутузăва корпус командирĕ туса Австри çарĕпе сыхăнма хушнă. Вăл часах Австри çарĕсен аслă командуйущийĕ пулнă Маккăн тăрлавсăр приказĕсем усăсăррине туйса илнĕ, анчах хирĕçме пултарайман.

Макк хăйĕн пĕтĕм çарĕпе Наполеона парăнсан, Кутузăвăн кайала чакмала пулнă. Вăл тăшмансен аллине лексерен ăсталăн сыхланса, 400 çухрăм йĕркелĕн чакнă. Кунпăн ăна Наполеон „ватă тилĕ“ тесе йат панă.

Хăйне вырăс тата Австри çарĕсен аслă командуйущийĕ тусан, Кутузăв пĕрлешÿлĕ çара Аустерлиц çывăхĕнче вырнаçтарнă. Хăй вăл Наполеонăн сылтăм флангне çавăрса илме кайма хатĕрленекен колоннă патĕнче пулнă, анчах колоннă вырăнтан хапранман. Пăшалсем те пĕр çĕртех тăнă.

Александр патша ун патне пынă та:

— Михаил Илларионăвич! Мĕншĕн есĕр малала каймастăр?—тенĕ.

— Колоннăн пур çарĕсем те пуханасса кĕтетĕп,—тесе ответленĕ Кутузăв.

— Епĕр Царицын улăхĕнче мар вĕт, унта ăна полксем пурте пымасăр парада пуçламаççĕ, — тенĕ каллех Александр.

— Государь! Царицын улăхĕнче мар пирки çав пуçламастăп епĕ, хушатăрах пулсан...

Патша хушнă, Кутузăв сухату тунă. Çавăнтан вара вăрăма тăсăлнă Турци вăрçичченех ăна ответлă ĕçсем хушман.

Наполеон тапăнас умĕн тин Александр хăйĕн çиллине шăнарса, Кутузăва Дунай çывăхĕнчи çарăн командуйущийĕ тăват.

Кутузăв Рутчук патĕнче тăшмана çĕнтерет, анчах ку крепăçĕ йышăнмасăрах кайала чакнă, пек туса, тăшмана Дунай тепĕр йенне илĕртсе каçарнă та йăлт çĕмĕрсе тăкнă.

Килĕшÿ тума васкамала пулнă. Килĕшÿ çинчен Кутузăв хăй калаçнă. Килĕшÿ условийĕсем пирĕншĕн пит усăлах пулман. Çавăнпа та патша кăмăлсăрланнă. Çавăн чухне Кутузăвăн авторитечĕ çĕршывра пысăк пулнă.

(Йулашки 4-мĕш страницăра).

Польшăра майăн 1-мĕшне хатĕрленни

ВАРШАВА. Майăн 1-мĕш сывхарнă май, Польшă еçсыннисен пĕтĕм халăхпа пĕрле фашисла йĕркене хирĕçле лозунгсемпе тăвакан демонстрацине салатса ярас шутпа пур майсемпе те ирĕксĕрлеме, провокаци тума пуçланă. Полици рабочисен уйăх умĕнхи пухăвĕсем çине тапăнать. Йалсене йатарласах полици „подкрепленийĕсене" йарассе, унрам моторизациленĕ полици колоннисем тăвассе тата ыт. те.

Террор вăйланнине пăхмасăрах, Польшăри еçсынни массисем майăн 1-мĕшне хатĕрленессине сарлакан туса пырассĕ. „Тыдзень работника" хаçат çапла çырать: „Пĕтĕм Польшă тăрăх рабочисен массисем хушшинче рабочисен праçникне — майăн 1-мĕшне хатĕрленес ĕç вирлĕн пулса пырать. Парти комитечĕсемпе профсоюз организацийĕсем майăн 1-мĕшĕнчи праçнике лайăх хатĕрленсе тата çав кун хирĕç йăлавсемпе тухнă демонстрацире еçсыннисен ытларах пулччăр тесе пĕтĕм вăйран тăрăшассĕ".

(ТАСС).

Америкăри ĕçсĕр тăрса йулнисен пурнăçĕ

Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсем çĕнĕ экономикăлла кризиса кĕрсе кайнă. Производствă кашни кунах чакса пырать. Рабочисене пинĕшерĕн урама кăларса йарассĕ.

Америкăри „Нью Рипаблик" журнал кăтартнă тăрăх, Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенче халăххи вăхăтра ĕçсĕр тăрса йулнисем 14 мĕлйун çын шутланассĕ.

Мĕнле пурнăçсĕ-ха ĕçсĕр тăрса йулнисем?

Журнал тĕслĕхĕшĕн Стелл çемйине, Нью-Иоркри ĕçсĕр тăрса йулнисен 183 пин çемйинчен пĕрине, илсе кăтартать. Унăн çемйинче пилĕк çын.

Еçсĕр тăрса йулнăшăн тӳлекен пособи çуррине Стелл хватершĕн паратъ. Тепĕр çуррине вăл хăйĕн çемйине аран-аран тăрантаркаласа усрать. Илессе чи йӳнĕ хакпа сутакан продуктасене илессĕ. Ернен малтанхи кунĕнче Стелл çемйин кантăрлахи апачĕ кишĕр йарса пĕçернĕ йашка пулнă. Каçхине те çав йашканах çинĕ. Иккĕмĕш кунĕнче çемье пĕçернĕ кишĕрпе тăранса пурăннă, виççĕмĕш кунĕнче те çавнах çинĕ.

Март уйăхĕнче ĕçсĕр тăрса йулнă пирки паракан пособисене чакарнă. Çакан хыççăн Стеллĕн апатçимĕç çине кайакан расхутсене чылайах пĕчĕккетмеле пулать. Çакна палла тумала: Стелл çемйисем йевĕрлĕ ытти нумай çемйисемпе танлаштарсан, лайăхрах условисенче пурăнать, мĕншĕн тесен ытти хуласенче пособисене Нью-Йорк хулинчи пек те мар, сахалрах тӳлессĕ.

Литтл Рокри (Арканзас штачĕ) ĕçсĕр тăрса йулнисен 2.000 çемйисем кимĕнле пулăшу та илеймессĕ, вĕсем выçса вилесси патнех çитнĕ.

(ТАСС).

Украинă К(б)П Тĕпкомĕн Пленумĕ

КИЙЕВ, апрелĕн 26-мĕш. (ТАСС). Апрелĕн 25—26-мĕшсенче Украинă К(б)П Тĕп Комитечĕн Пленумĕ пулса иртнĕ. Пленум партин йĕртсе пыракан органĕсен суйлавĕсемпе тата Верховнăй Совет суйлавĕсене хатĕрленессипе çыхăнса тăракан ыйтусене, çавăн пекех тата Украинă К(б)П XIV-мĕш съесне пухас ыйтăва сӳтсе йавнă.

Пленум Украинă К(б)П XIV-мĕш съесне 1938 çулхи июнĕн 10-мĕшĕнче Кийĕв хулинче пухма йышăннă.

„Вырăс литературин историне" тата „Хĕвелаппăс литеретурин историне" кăларассĕ

Апрелĕн 24-мĕшĕнче Мускавра ССР Союзĕн Аслăлăхсен Академийĕн общĕстввăла аслăлăхсен уйрамĕн литературă ушканĕн сессийĕ уçăлнă. Унта „Вырăс литературин историне" тата „Хĕвелаппăс литературин историне" кăларма хатĕрленни çинчен П. И. Лебедев-Полянский, В. А. Десницкин тата Н. К. Пиксанавăн доклăчĕсене итленĕ. Çак икĕ произведени кашнийех вунă томран тăмала пулать. Малтанхи çичĕ томне çак çулта пичетте памала. Вĕсен изданине пилĕк çуллăха шутласа хунă.

(ТАСС).

Саккунсăр кăларнисене колхоза кайала илессĕ

ЛЮБИМ (Ярославль облаçĕ), апрелĕн 26-мĕш. (ТАСС). Районти колхозниксем ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕн колхозниксене колхозран кăларма чарасси çинчен йышăннă постановленине пысăк кăмăлпа сӳтсе йавассĕ. Колхозран тĕрĕс мар кăларнисене колхоза кайала илессĕ тата вĕсене колхозри активлă пурнăçа явăстарассĕ.

Дмитриковск йалсоветĕнчи „Руно" колхоз председателĕ пулнă Мисуков ертелрен чылай колхозникĕсене кăларнă. Çак кунсенче колхозниксен пĕрлехи пухăвĕ Ивановпа Турунăвă йултăшсене колхоза кайала илнĕ. Иванова халь бригадир тунă. Унăн бригади май уйăвĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăннă. Вăл çуракине лайăх иртерме тата каçалăк çул пысăк тухăçлă йĕтĕн тăвса илме пулнă.

Маргейтри шахмăт турнирĕнче

ЛОНДОН. Рейтер агентствин пĕлтернĕ тăрăх, Маргейтри (Англи) 5-мĕш шахмăт турнирĕнче 34-мĕш ходра Петров (Латви) Алехинран выляса илнĕ.

(ТАСС).

ÝКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: „ЦО Правда" пăрахутăн Ленинград — Шлиссельбург хушшинчи малтанхи рейсĕ.

Мазелĕв фото-ÿкерчĕкĕнчен (Союзфото).

Н. И. Шелепи

АКСУРА

Кунĕн-çĕрĕн: тан-тан!..
Еметсĕр шуйтан
Те тухнă çăваран,
Те шывран-шуртан.

Йаланах çакă сас
Пулнă Аксура.
Пупсем йурласа
Мухтанă турра.

Пирĕн тарпа писнĕ
Апат-çимĕçе
Пĕр ахалех пупсем
Пурăннă купсе.

Йал тăрăх çӳренĕ
Хĕрессем йатса,
Упа пек мĕкĕрнĕ
Çимели ыйтса.

Вĕт-шак ачасене
Харатса йĕртсе,
Килсе ренех çӳренĕ
Шыпа сирпĕтсе.

Пуп кусĕ — нухрепе кус
Пĕлмен тăранма.
Ыйтнă вăл пит нумай,
Сахалпа çырлахман.

Пурне-çукне пĕлмен,
Ыйтнă ăрукне.
Пур апат-çимĕçне
Çинĕ йантине.

Вăл вăрăм çӳçсене
Чармак куççене,
Вилли те, чĕрри те
Пана тупăшне.

Çуралсан йат хума,
Вилессĕн — чикме
Чупнă тек чиркĕве,
Чиксе... кĕсйене.

Чăххи-çăмартине,
Тырри-пуллине...
Паратťăмăр вара
Мĕн пур йур-вара.

Çамне, пир-аврине
„Тата ыттине...
Панă мĕн пуррине,
Вĕсем ыйтнине.

Еç халăхне вĕсем,
Тăранман пупсем,
Тетерне тек тĕнпе,
Йӳçĕ тĕтĕм пек.

Пулăшнă патшана,
Халăха çаратнă...
Патракпа чухăна
Йывăр пурăнма.

Еçлене, ырлăхне
Курайман вĕсем,
Вĕсем тунă ĕçпе
Пуйнă кулаксем.

Совет влаçĕ телей
Пачĕ Аксăва,
Пачĕ йăна тата
Хурçă вăй-хăват.

Халь ĕнтĕ Аксура
Пурнăç урăхла.
Калăн çав халь йăна:
„Йал мар ку, хула".

МТС каçхине
Мĕн пур сурчĕсене
Илйич ламписемпе
Çутатать, хĕвел пек.

Турă, пуп — кирлĕ мар
Çĕнĕ Аксăва.
Çĕнĕле ĕçлесе
Вăйлă тыр тăвать.

Савăнассĕ чунтан
Аксу çыннисем.
Пур унта вĕренме
Тĕрлĕрен шкулсем.

Кĕсйинни, вăтамми,
Педтехникум та
Сталинла кунçулта
Пулчĕ чул сурра.

Итлеме кăмăлтан
Пур радио та.
Докладсем те тăвать,
Йурă та йурлать.

Спектаклсем выльать
Колхозниксемшĕн;
Пурнăç — пиренĕшĕн,
Еç çыннисемшĕн.

Хула пекех кĕрлет
Колхозлă Аксу.
Мĕншĕн тесен, унта
Халĕ пусмăр çук.

Коммунисăм тăвас
Мухтавлă ĕçре
Хастарлă та хавас,
Ударла ĕçлет.

Хаçатсем çине те
Хамăр çыратпăр.
Йурă-сăвасем те
Шаранратарпăр.

Йурăсем илемлĕ,
Саввисем хитре.
Çавăнпа манăн та
Савăнать чĕрем.

Хăвăртран та хăвăрт чупакан çĕнĕ пăравус

Ворошиловградри „Октябрьская революция" завочĕ хăвăртран та хăвăрт чупакан çĕнĕ „2-3-2" пăравус майлаштарса çитерĕнĕ. Вăл пĕр сехетре 180 километр таран кайма пултарать.

Савăт коллективĕ пăравуса майăн 1-мĕш тĕлне туса çитерес тата тĕрĕслесе пăхас тесе кĕрешет.

(ТАСС).

СУД

Варламăвăн тискер ĕçĕ

Йӳçкасси йалĕнче (Трак р.) пурнакан çамрăк Мĕтрин пурнăçĕ 1928 çулхине начарланнă. Ку çулхине унăн тăван амăшĕ вилнĕ. Амăшĕ тепĕр хĕрарăмпа — Варламăвă Марфапа мăшăрланнă. Марфă çак çамрăк ачана тивĕçлĕ пăхса çитентересси çинчен тăрăшман. Ана вăл час-часах хĕненĕ, выçă çӳретнĕ. Ашшĕ килте чухне çеç çамрăк Мĕтрин хырăмĕ тутă пулнă, унчухне çеç выльăнă вăл, кулнă та. Çак çемйери килĕшӳлĕ йĕркелĕхе Варламăвă курайман. Ачана пăхнăшăн упăшкипе те сахал мар харкашнă.

1932 çулхине Мĕтри ашшĕ сапаптăк вилсе кайнă (унăн вилĕмĕн сăлтавĕ халĕ те палла мар-ха, ăна тухтăрсене пăхтармасăр, васкавлăн пытарнă пулнă). Çапла вара, Мĕтри хăйĕн йуратнă ашшĕне çухатнă, вăл сем тăлăха тăрса йулнă. Палхас, унăн пурнăçĕ, ашшĕ вилнĕ хыççăн, темиçе хут ытларах начарланнă. Ачаран хăтăлма, ачан пурнăçне татма Варламăвă тĕрлĕрен сăлтавсем шыранă. Ачана вăл шкула çӳреме пăрахтарнă, пĕр айапсăр ачана „вăрă" тесе йал çине йат сарнă. Ача хăй килĕнче пурăнми пулнă: аçта тĕл килнĕ çавăнта апатланнă, аçта тĕл килнĕ çавăнта çĕр каçнă. Пĕрехинче ана урамра выляса çӳренĕ çĕртен Варламăвă хĕнесе-хĕнесе килне илсе кайнă. Пӳртне илсе кĕнĕ те, çавăнтах Мĕтри майĕнчен пăвăв йалмаклаа çаклатнă. Ача чут çеç вилмен. Ана çак пӳкле вилĕмрен кӳршĕ çыннисем çитсе хăтарнă.

Калас пулать, çак чăтма çук киревсĕр ĕç йалти общĕственнăй организацисене тăхçанах палла пулнă. Районри çутĕç пайĕ те пĕлнĕ ку ĕçе. Анчах никам та унă шухăшлă Варламăвăн вăхăтра çирĕп ответ тыттарма шутламан.

1936 çулхине Варламăвă Петров тенĕскерне хăй патне киле куртса мăшăрланнă. Петров малтанласа çамрăк Мĕтрине йуратса пăхам пек пулнă. Кӳршĕ-аршăсем хăваланнă. „Мĕтри тинех лайăх пурăнма пуçлать ĕнтĕ", тенĕ. Анчах çук. Хура йунлă Варламăвă çĕнĕ упăшкине час-часах ачаран сивĕтнĕ. Ун çинчен тĕрлĕрен сăлтавсем тупса елекленĕ. „Çав Мĕтри вилмесĕр епĕр ырра пурăнас çук" тейекен кăмăла çитерсех кăларнă.

1938 çул. Йанварĕн 5-мĕш. Çĕрле. Мĕтри урайĕнче, хăйĕн йаланхи хисепсĕр выранĕнче, канлĕн çывăрнă. Пӳртре Варламăвă çеç. Вăл çывăрман. Вăл алăкăн-тĕпелĕн утса çӳренĕ. Вăл хăйĕн тахçан шухăшласа унă тискер ĕçне пурнăçа кĕртме хатĕрленнĕ. Варламăвăна никам та чăрмантаракан пулман. Çывăракан ача тумтирĕсене вăл ретсе йана.

Çамахпа калайми, хут çине çырса кăтартайми хăрушă асаплана 10 сехет хушши асапланнă хыççăн Мĕтри вилнĕ. Çапла тăталнă унăн, 12 çулхи ачан, пулас хавасла кунçулĕ.

Çакă ĕçе Чăваш АССР Верховнăй Сучĕн выранта тухса çӳрекен Сессийĕ апрелĕн 22—23-мĕш кунĕсенче Йӳçкасси йалĕнче пăхса тухнă. Суд, айапланакансене ыйтса тĕпченнисĕр пуçне, ку ĕçпе 17 свидетелтен ыйтнă. Свидетелсем пурте Варламăвăн тискер ĕçне пĕтĕм черрен ылхаса. Варламăвă çамрăк ачасене курайманнипе, вăл тĕрĕс воспитани паракан ача амăшĕ пулманнипе лайăххăн кăтартрĕç. Ку ĕçре Варламăвă упăшки Петров та айаплă пулнă.

Варламăвăна 10 çул, Петрова 2 çул хупса усрама приговор йышăнчĕ суд.

Митта П.

Мăнкуна хирĕç

Апрелĕн 22-мĕшĕнче Услапа йалĕнче (Вăрнар р.) колхозниксен пĕрлешӳлĕ пухăвĕ пулса иртнĕ. Пухура тĕн сĕрĕмĕн сийенĕ çинчен доклад пулчĕ. Доклад хыççăн пуху пупсен мăнкуне уйавлас мар, еçсыннисен аслă праçникне — Майăн 1-мĕшне лайăх хатĕрленсе ирттерес тесе йышăнчĕ.

Пухура çураки çинчен сӳтсейавреç, мăнкун кунĕ акана тухма йышăнса хăварчĕç. Апрелĕн 23-мĕшĕнче çурхи çĕртмене сухалама тухрĕç.

И. Куликов.

Фельдшĕрсем вĕренсе тухаççĕ

Майăн 1-мĕш тĕлне Шупашкарта фельдшĕрсен квалификацине ӳстермели çултăлăкăх курсран фельдшĕрсем вĕренсе тухаççĕ. Апрелĕн 15-мĕшĕнче експамен пуçланнă. Осипăв, Пайраш тата Чирков врачсем лайăх вĕрентнипе йăшчир, хирурги тата йĕрекен чирсем тăрăх чылай курсантсем „отлично" паллăсем илчĕç.

Курсран вĕренсе тухнă фельдшерсем районсенчи пульницасене ĕçлеме кайаççĕ.

И. Йакавлĕв.

КĔСКЕН

Комбайнерсен курсĕ. Çĕрпӳре районри колхоз шкулĕ çумĕнче апрелĕн 21-мĕшĕнче комбайнерсем хатĕрлекен 2 уйăхлăх курс ĕçлеме тытăннă. Курсра пурĕ 30 çын вĕренет. Вĕсен хисепĕнче 10 хĕр.

А. Иванов.

26 киле радио кĕртнĕ. Мыскаринкассинчи (Ишлей р.) „Социализм" колхоз членĕсем майăн 1-мĕш тĕлне 26 киле радио кĕртрĕç.

В. Шорин.

Май уйавне хатĕрленеççĕ. Тăвайри вăтам шкулта 8—9—10-ш классенче вĕренекенсем май уйавĕ тĕлне (кашниех 2—3 оборона значокĕ илме хатĕрленеççĕ. Халь 109 ача ПВХО значокĕ илчĕç, 25 ача ГСО значокĕ, 15 ача БГТО, 8 ача Ворошилов пек тĕл перекенсен значокĕсене илчĕç.

Кунсăр пуçне авиомоделисен кружокĕ 21 модел тунă. Вĕсенчен 7 модел хăй тĕллĕн вĕçекенсем. 22 ача патефон тунă, М. Королев, Архипăв, П. Алексейев детекторлă радиоприемник лартнă.

В. Илйин.

ПВХО значокĕсене илчĕç. Йӳçкассинчи (Елĕк р.) вăтам шкулта вĕренекенсем 13 ача ПВХО значокĕн нормисене парса значоксем илчĕç. Халĕ татах 31 ача норма пама хатĕрленессĕ.

А. Ландышĕв.

„Петр 1-й" кино йалта. Кашавăшри (Ишлей р.) Карл Маркс йачĕпе тăракан колхозра „Петр 1-й" йатлă кино-картина кăтартрĕç. Кино курма халăх питĕ нумай пухăнчĕ.

Н. Васильĕв.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНĂВ.

Аслă полководец

(ЙУЛАШКИ)

Наполеон Российăна шаларан шала кĕрсе пынă май сăлтавсăрах аслă командующи пулнă Барклай-де-Толли çĕршыва хутлалан çинчен каласма пуçланă. Ун вырăнне Кутузăва лартма ыйтнă. Ирĕксĕрех вара Александр ку шухăшпа килĕшет:

— Халăх ăна лартма ыйтрĕ. Епĕ лартрăм, — тенĕ вăл.

Бородино çапăçăвĕ хыççăн Пермолов генерал ун çинчен çапла каланă: „Фрашци çарĕ вырăс çарне пĕрсе саланчĕ". Апла пулсан та, Кутузăв Филйри çар совечĕнче фронтра нумай сухатсуем пулни пирки калла чакма хушнă.

— Мускава сухатнипе Российă пĕтмест-ха. Хамăн умма çара тытса тăрас ыйтăва, Мускава парса тăшман выльăм вилĕм хатĕрлес ыйтăва лартрăм. Хам çине пысăк ответлăх ӳкнине пĕлетĕп, анчах епĕ тăван çĕршыв усишĕн хама пама та хатĕр, — тенĕ вăл.

Мускава парса уншăн çĕрле хĕрӳлĕ патриотсăн куççулĕпе макăрнă вăтă полководецăн кĕ ăсне-ăсне шута илмесĕр, ун пирки ăна наступлени тухма васкатнă.

„Есĕр Мускава хăварнăшăн çĕршыв умĕнче ответ тытма тивĕçлине ан манăр", — тесе пунасă сырнă вăл Кутузăв патне.

Çав тăваçă Александр патша Кутузăва Мускавран Наполеон йанă Лористон генерала килĕшӳ тăвассипе çыхăнса калаçнăшăн выльăрнă пур.

Вăл Кутузăва Наполеона Мускавра унăн çар пайĕсене çĕршыв хушшинчен тытса тăрас шутпа мир çинчен калаçма килĕшнине йăлахăнан.

— Выльăнăшăн пашине чарăнса тăмасăр. Александр патша Кутузăва татах та хĕстерме пуçланă.

Кутузăв пĕр çар отрйадне йертсе пыма Калугă кĕнĕрннине полици çăланине пурăнакан, оставкăна тухнă Пашвил генерал-майора хушнă.

Александр патша Кутузăв патне васкавлăн çыру çырать:

„Сирĕн рапăртсенчен пĕринче есĕр сесылкара пурăнакан паллă Пашвиле, вăл санавра пуранни çинчен унăн губернатăр пĕлтернипе ытла илмесĕр, служба панине пĕлсен, епĕ питĕ тĕлĕнтĕм. Еçĕ çес пуннатракан ĕçе есĕр хăвăр çине илнĕ. Çавăншăн сире асăрхаттаратăп; халех Пашвиле ылăштарма çын йама, Пашвиле Чĕмпĕр губернаттăр патне сирĕн сыхлăхра пурăнма ăсатма хушатăп".

Кутузăв вара Александра кĕске рапăрт çапла пĕлтернĕ:

„Сирĕн императăрла величествăна оттавкăна тухнă генерал-майор Пашвил пирки кĕлтернĕ хăйĕн йалне таврăнни çинчен пĕлтерме тĕлей тупрăм".

Кутузăва чăрмантаракансем нумай пулнă: патша шанманни, штаб начальникĕ Бенигсенăн чăрмантарнă. Мускав губернатăрĕ пулнă Ростопчинăн елекĕсем, пысăк чинлă офицерсем чапшăн çунса Кутузăва курайманни. Кутузăв хăйне халах тата вăл йертсе пыракан çарсем аншан пăхнине çес лайăтнă. Петербургран килнĕ чухне çул çинче хула çыннисем çăкăр-тăварпа кĕтсе илнĕ. Кутузăв час-часах лашасене тăварса илсе, Кутузăв ларнă урапана хăйсем туртса пынă.

Хресченсем васкавлă ĕçсене пăрахса, иртсе кайакан полководец çине кăшт та пулин пăхса йулас тесе, çул çине чупса тухнă.

Кутузăв хыçĕнчен:

— Российăна хăтар! — тесе кăшкăрнисем илтĕннĕ.

Çарсем Кутузăва пысăк чыс парса кĕтсе илнĕ: „французсене çĕмĕрме Кутузăв килчĕ", — тенĕ. Салтаксем каллачалла чухса çӳренĕ, тумтирĕсене тасатнă, строна нухăмна пуçланă.

— Кирлĕ мар, нимĕн те ашла тума кирлĕ мар! Епĕ хамăн ачамсен сывлăхне çес пĕлме килтĕм. Походри салтака капăрланма вăхăт çук: ĕç хыççăн унăн канмала та çĕнтерӳ тума хатĕрленмелле, — тенĕ вĕсене Кутузăв.

Салтаксем тĕлĕннĕ:

— Ак пирĕн атте килчĕ. Вăл пире мĕн кирлине пĕтĕмпех пĕлет. Унпа çапăçма мар-и мар! Унăн кус умĕнче пурте пуçа хума хатĕр, — тенĕ вĕсем. Курнă çынсем каланă тăрăх, „бивуаксен тĕрлĕ хирĕсем, пумайрапа çапа пулманкерсем, йурăсемпе, музыкăпа хаваннă".

Бородинăри çапăçу пуçланичен çарĕсене пăхса çавăрнă та, Кутузăв вĕсене, ăна кĕске сăмах калань:

— Сирĕн тăван çĕршыв сыхламала пулать, йулашки пин тумламĕчченех тăшман чакмалла туллала. Кашни полк ĕçе кĕрет. Сире, часовойсене улăштарнă пек, улăштарас. Кашни икĕ сехет хушшинче улăштарса тăрассĕ. Епĕ сирĕн çине шанатăп. Çарсем сулпуçĕ хунă шанăçа ĕçре пурнăçа кĕртнĕ. Кутузăв командирсене ытлашши планпа чăрмантармасăр.

Çака çапăçу йĕркине, — тенĕ Бородинăри çапăçăвĕ çинчен приказра, — тăшман кăвĕлĕсем хăм çине çаврăнтарса пăхтарса, унăн ĕçĕсене курса хамăн ĕçсене йĕркелеттĕп. Çапăçу вăхăтĕнче пур пуктсенче те пĕлма пултараймăн пирки çарсен командующийĕсен лайăх хатĕрленĕ çине шанатăп, çавăнпа та вĕсене тăшмана çĕмĕрме кирлĕ майсемпе тупма хăйсене ирĕк паратăп".

Бородино — Наполеонăн масар пулса тăнине лайăх ăнланса, ку çапăçу çинчен арăмĕ патне Кутузăв çапла çырса пĕлтернĕ:

„Тав турра, савнă тусăм, епĕ сывах-ха, вĕлерейменĕр, епĕ Бонапарта çĕнтерсе. Тĕрĕ кăмăллă тусăм, ачасене ырлăх сунатăп".

Малашнехи событисем Кутузăвăн тытнă тактикăна пит лайăх тӳрре кăларнă. Наполеонăн Мускавран тухса, хăй килнĕ Смоленск сулĕпе кайала чакмала пулнă. Кутузăв хыçалтан хăваласа пынă.

Интервентсен вăйĕ пĕтсе ларнă. Наполеонăн 610 пинлĕ, 1370 тупăлă çартан 552 пин çын тата 1200 тупă Российă хирĕнче çухалса йулнă.

Кутузăв Наполеона çĕмĕрсе тăкнă хыççăн, хăйĕн задачине вĕçленнĕ тесе шутланă, анчах Александр патша вăрçăна тăшмана хăваласа йанă хыççăн та малала ăçасшăн пулнă. Вăл Кутузăва Пруссие çине тапăнма хушнă.

Бунцлау хулинче (Силези) 68 çулхи Фельдмаршал шанса пăсăнна та часах, 1813 çулта апрелĕн 15(28)-мĕшĕнче вилнĕ.

Аслă полководецăн ӳтне, Петербурга илсе килсе, Хусан Соборĕнче пытарнă, Кайаракша ун умне Кутузăва асăнса палăклăх палăк лартнă.

Ф. МУСКАТБЛИТ.

Мускаври геологи тресчĕн Тутар республикĕнчи геологи буровĕ

Чăваш республикĕнче инженерла-геологилĕ ĕçсене, гидрогеологи тата топографи ĕçсене туса пама йышăнать.

Çавнашкалах — площĕтсене плăн çине ӳкерсе илме, çĕр айĕнче усăлă йапаласем пуррине шыраса пăхма, разведкăсем тума тата шăтарса шыв пуррине пĕлме заказсем йышăнать.

Çак адрĕспе пĕлтерĕлĕ: г. Казань, Чернышевская 2. ТАТГЕОЛОГОРАЗВЕДКА.

Шупашкарти сасла кино-театрта

Апрелĕн 28-мĕшĕнчен пуçласа кашни кун

Çĕнĕ, илемлĕ, саслă, пысăк фильм

„ВЕЛИКИЙ ГРАЖДАНИН"

кăтартаççĕ.

Сеанссем — 6 сех. 30 мин., 8 сех. 30 мин. тата 10 сех. 30 мин. каçхине пуçланассĕ. Касса кăнтарла 2 сехетре уçă.

Дирекци.

КОГИЗ-ăн Чăваш республикĕнчи уйрамне ЕКОНОМИСТ-ПЛАНОВИК КИРЛĔ.

Çак адрĕспе пымала: Шупашкар хули, М. Горький урамĕ, 5. КОГИЗ.

Академи театрĕнче

Апрелĕн 28-мĕшĕнче

Вырăсла спектакль

Л. Н. ТОЛСТОЙ

АННА КАРЕНИНА

(5-пайла)

Аслă режиссĕр Г. В. СТРАНСКИЙ лартать.

Художник Й. Н. САПОЖНИКАВ.

Талон № 179.

Абонемент № 5, талон № 17.

Уполномоченный Чувашглавлита № 217. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.